К 84.09(=Чув)
Л25
Ч-42655

Никита Ларионов

# Ват ăшши

Национальная библиотека ЧР
4-042655

Обязат. экз.

**Никита ЛАРИОНОВ**

# ВАТ ĂШШИ

Сăвăсем

Шупашкар
“Çĕнĕ Вăхăт”
2010

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-5
Л 25

ПРОВЕРЕНО
2010

Л 25 **Н.Ларионов.**
**Ват ăшши.** Сăвăсем. – Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2010. – 96 с.

Кĕнекере тĕрлĕ çулсенче çырнă сăвăсем: ачалăхран пуçласа ватлăха çити. Вĕсенче çут çанталăкпа этемĕн шухăш-кăмăлĕн уйрăм енĕсем палăраççĕ. Йĕркесене пĕр-пĕрин хыççăн хăçан йĕрленине кура вырнаçтарнă.

И-42655
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© Ларионов Н., 2010

## ТĔКĔНЕЙМĔ ÇЫН АЛЛИ

*Шӳт*

Ик хăлха-и? Виç хĕвел!
Питĕ сивĕ кун паян.
Пуç чиксе ăçта каян?
Ăшă хупăнчĕ хĕве.
Урлă-пирлĕ сик, куян!
Хирĕçме епле хăян?

Сăвă çыртăм сăвăрса,
Шӳтлĕн-путлĕн килтерсе.
Кам-ши вулĕ киленсе?
Пăхса тăрăн савăнса,
Шиклĕхе вăйпа сирсе,
Савние аса илсе.

Çăтăр-çатăр вăрманта,
Телекурăм çук çĕрте,
Хур тĕкне ăшт-ăшт вĕрсе
Йĕрмелерĕм хам ята,
Кĕнекешĕн тилмĕрсе.
Ан палка чĕрре кĕрсе.

Иртнĕ ĕмĕр – хыçалта:
Пĕрисен йăх-йăх кулли
(Авăнать çӳçе вулли),
Тек тăраймăн хуралта.
Хамшăн çырăп, хам валли,
Тĕкĕнеймĕ çын алли.

*2009 ç., раштав*

* * *

Хирте тĕрлĕ чечек нумай –
Хĕрли, шурри, кĕренни...
Ялта сарă хĕрсем нумай –
Пурте чунăм юратни.

*1943 ç.*

* * *

Шарласа юхать Хирлеп
Çыранта кăпăкланса,
Алана хĕрне лартса
Пуллине унта ĕрлеп.
Пирĕнтен вăл инçех мар:
Шăп километр уттар.
Пуллине тем чул тытас –
Йăпăлтак, кутан, партас.

*1948 ç.*

## АЧАЛĂХРИ, АСРА ЮЛНИ

Туссем, çĕн çул паян.
Эп хисеплеп, пуçа таяп,
Кив çулăм, сан ĕçӳсене,
Уйра кашланă тыр-пулне
Эпир ӳстернĕ вĕсене.

* * *

Кăнтăралла иртет хур кайăк,
Сар çулçине тăкать чие,
Тӳпе таса, илемлĕ, лайăх...
Çан чух тинкертĕм сан çине.
Шăпах ларать çаралнă хурăн,

Пуçне таймасть те вĕрене,
Çамрăк сирень сывлать çеç хурлăн...
Çан чух тинкертĕм сан çине.
Пĕрле утасчĕ инçене.

*1950 ç.*

* * *

Ял енчен тăсăлать аслă улăх,
Çывăхрах ав вăрман курăнать.
Симĕс курăк çиет ĕне-сурăх,
Ир-ирех тинкерсеттĕм ăна.
Кăнтăрла хай кĕтÿç васкамасăр
Выльăха антарать шыв хĕрне.
Пушшипе хăмсарать тахăшне вăл,
Хăй çапах янрататъ юррине.
Шăрăхран тăр шывпа шăварать те
Таврана тинкерсе кăшт тăрать,
Çил çине уçăлмашкăн вара тин
Кĕтĕве пуçтарать тапăра.

*1951 ç.*

* * *

Экзаменсем пыраççĕ вĕçленсе,
Хура тара çамка çинчен шăлатăп.
Кĕç каникул! Хаваслăн киленсе
Каллех, каллех тăван ялта пулатăп,
Тăван яла каникула каятăп.

*1954 ç.*

## ÇАПАХ ТА МĔНШĔН ШĔЛ КĂВАР?

Чĕрÿ сив чулчă маншăн.
Ним пĕлмесĕр

Эп çунтăм саншăн,
Çырла пек хĕр.
Миçе хутчен, мĕн пек пулса
Савмас тесеттĕм –
Манаймарăм.
Умра шавах курса
Сана çеç пĕр.
Мĕн пулчĕ? Сапрăм шыв.
Çула танккарăм...
Шлюбкăна
Вăрах çеç çавăрч ăшă çил.
Шыв çийĕ тикĕс...
Пĕр çакăн чух
Чун таппине ыраттарма
Пĕр маншăнах-ха
Мĕн-ма эс пултăн
Хам çуннă евĕр шĕл кăвар?
Чуну çăл куçĕ пек тасах...
Ĕнтĕ пулаймăп тус –
Ху алă сул.

*1956 ç., июлĕн 29-мĕшĕ*

## ЭП ТЕ ÇАМРĂК ПОЭТ

*Шÿт*

Петĕр-кĕтĕр Вашават
Сăвăсене вашт! авать.
Пичет çуртне каять те –
Сăвви те çук, суять тет.
Чăнах та пуль. Мĕн тăвас?
Пÿрне хуçас – шут тăвас?

Пичче тес-и шăллăма:
Мартынова? Петрова?
Пичетлеççĕ шăкăрах
Инкубаторти пекех.
Эх!

Ритма-и, рифмăна,
Сăвă виçи тенине
Вунă çултах эп ăна
Виçсе пăхнă. Тенине*
Начар темен ун чухне,
Анчах юлнă хăйĕнчех.

Кĕвĕçес-и? Пиçĕхсе
Литературăна кĕрсе,
Шăрça ярăм сапаласшăн
Çирĕм пиллĕк тултарсассăн.
Эс ĕненĕн. Пулмĕ темĕп
Хам мĕнле?
Çавă çав. Тек хăвармăп ырана.
Пиçĕ-тухĕ – хырăнас.

*1956 ç., çĕртме, 25. Саратов*

## ШӲТ

Поэт хăй пурнăçне мĕнле иртгернĕ?
Поэт хăй пурнçăне шăрттан пич тенĕ.

*1956 ç., Саратов*

---

*Тени – хушма ят.

## ТУТĂР ТĔСĔ – ХĔРЛĔ ÇИП ПĔРЧИ

Каç урамран час таврăнман пирки
Уроксене ирпе çыратăп.
«Пальто тӳми çинче, ха, çип пĕрчи», –
Хваттер хуçи темскер курать ав.
Хуллен хушатăп: «Пултăм вăйăра,
Ташланă чух çакланнă мар-и?»
Анчах картина урăх ман ăшра:
Хĕрпе эп тăтăм, çупăрларăм.
Ак тутăр тĕсĕ – хĕрлĕ çип пĕрчи
Пĕрлех манран юлмасăр кĕнĕ.
Апла пулсан, ан тив, ан ӳктĕр-и...
Çиппи çеç мар, тутри те кĕтĕр.

*1958 ç.*

## КĔМĔЛ КУБОК

Кĕмĕл кубок алăра,
Çут медаль те кăкăрта:
«Старт» колхозăн ачисем –
Çĕнтерӳçĕ ятлисем.

Вирлĕн-вирлĕн йĕлтĕрпе
Ыткăнса пыратпăр.
Сив çил тухрĕ витĕрех –
Сăртсенчен анатпăр.

Ĕçрен пушă вăхăтра
Йĕлтĕр пирĕн урара.

Вăрман чĕнет, килĕр, тет,
Хамăр ҫине юр ӳкет.

Черетленчĕ ăмăрту,
Пул эс ҫивĕч, хăвăрт тух,
Ҫĕнтерме ĕмĕтленсен,
Тертленмешкĕн те пĕлсем.

Кĕмĕл кубок алăра,
Ҫут медаль те кăкăрта:
«Старт» колхозăн ачисем –
Ҫĕнтерӳҫĕ ятлисем.

*1970 ҫ.*

## ПĔЧЧЕНЕХ

Сертере ҫӳретĕп вăрманта
Шĕшкĕлĕхри лăпкă уҫлăхра;
Кун каҫа кунта эп пĕчченех;
Кăмăл лайăх ăшă ҫуркунне.

Пĕчченех тухатăп ирхине
Ҫитес тенĕ пысăк ҫул ҫине.
Иккĕн пулсан ҫулĕ ӳсĕнет,
Пĕччен чухне шухăш сĕмленет.

Пĕчченех ашатăп вăрманта
Сивĕ кунра йывăҫ йĕлтĕрпе.
Пĕччен мар каятăп ăмăртма –
Яка тĕплĕ тепĕр йĕлтĕрпе.

Пĕччен чух çыратăп çырăва.
Иккĕн пулсан сăмах сыпăнать.
Йышпала çул хĕсĕк туйăнать,
Пĕччен чух çĕн шухăш çуралать.

Ĕмĕт-тĕллев — умра, катара,
Утăмлатăп çиле хирĕçлех.
Телее, тус пулчĕ юнашар —
Ырни сахал, çулĕ ӳсĕнет.

*1994 ç., çĕртме, 2*

## КАÇСЕРЕН ШĂНТАТЬ

Каçсерен шăнтать пит вирлĕ,
Кăнтăрла — хĕвел.
Çумăрĕ кăштахчĕ кирлĕ
Юр шывне хĕвме.

Тухатпăрах-ха çăва та
Хуллен, ерипен.
Çĕртмере йĕпхӳ çăвать пуль
Эрни-эрнипе.

Хĕл кăçал ытла лăп килчĕ,
Сивĕ — çатăрах.
Паяна çанталăк пилĕ
Йăлтăр-ялтăрах.

*1996 ç., пуш, 24*

## ПИН “ÇĂЛТĂР”

*Пĕтĕм чăвашсен тата тĕрĕк*
*халăхĕсен Олимп вăййисене*

Савăк Атăл йăлтăр-йăлтăр,
Хумĕ – кустăрма.
Çут çинче паян пин «çăлтăр»
Вăй виçет кăра.
Варкăш çил ытла вылянчăк –
Ачашлать ӳте.
Стадион ирех вăранчĕ,
Йыхравлать тӳрех.
  Çăлтăр сăнлă шĕкĕр Шупашкарăм,
  Пур чăвашăн чун ăшши, кăварĕ...
Анăçран та, тухăçран та –
Пĕтĕм тавраран
Килнĕ-çитнĕ, ав, куратăр,
Тăвансем карах.
Утассийĕ, чупассийĕ,
Сăнă пересси... –
Тĕрĕксен Олимп вăййи ку,
Тус-йышсен пуххи,
Юн вылянасси.
  Сыв сăн-питлĕ тăнăç Шупашкарăм,
  Аркăнта пин-пин çынна ташлатрăн.
Çăлтăр уйăх – тулăх уйăх;
Пиçнĕ пур çырла.
Кашниннех, ав, ырă туйăм.
Атлет çул çырать.
Çиçĕмле иртет яш кĕрĕм –
Хăшĕ çивĕччи?!

Вăрăм инçĕш Атăл хĕрĕн, —
Чупса çитрĕ-и?
  Çăлтăр шутлă шурă Шупашкарăм,
  «Çăлтăрсен» ятне çырса хăвартăн.

*1996 ç.*

* * *

*Н.В. кинĕме*

Çул инçĕшĕ аллă —
Ĕмĕрĕн çурри.
Çитес тĕл паллă:
Çĕртен иртĕпĕр-и?
Тулли кĕрекепе,
Тăван-пĕтенпе.

*1999 ç., кăрлач*

* * *

Ку халлĕн çанталăк
Е ăшă, е сивĕ.
Иртейрĕ çулталăк,
Пите кăшт тăм тиврĕ.

Кăрлач хыççăн нарăс
Уяр та пит ăмăр;
Ӳкет-çке пĕр харăс
Лап юр та вĕт çумăр.

Уй урлă каçмашкăн
Сукмак тĕл-тĕл хытă;
Мăн çул час-час ашăм;
Пăрлак — хырнă хыççăн.

Ниме те пăхмасть çын —
Ĕçре вăл ир кӳлĕм —
Хĕл касăн, çу касăн
Утать çирĕп пӳллĕн.

*1999 ç., кăрлач, 26*

## ЙĔЛТĔРПЕ ÇӲРЕТĔП

Йĕлтĕрпе çӳретĕп эпĕ
Шур юр çийĕн авсăнса,
Сăрта илтĕм тĕпĕр-тепĕр,
Анса кайрăм ярăнса.

Хырлăхпа выртан праçакĕ
Йĕр хупламĕ çилпелен,
Шăнпа хытнă тăрăх çакă
Вăрăм утăм килтерет.

Çаврăм çулăм вунă çухрăм.
Вăйăнк-вăйăнк ыткăнан.
Хăвăртрах-и паян тухрăм —
Шăм-шак ырнă чух кăна.

Хăшĕ хаклă: тупăшни-ши?
Пин-пин çухрăм хыçăмра.
Ăвăс-хурăнлăх ĕшнийĕ
Ав чĕнет татах умра.

*1999 ç., нарăс, 4*

## НАРĂС

Шап-шурă юр тавралăхра,
Кĕрт хулăм, тăнкăр — улăхра;
Çурт умĕ-хыçĕ çӳл сăртах,
Шăлса хытарнă кăлтăрах.

Кăрлач çул пачĕ нарăса,
Сивви юлман-ха пăрăнса;
Курнать кун тăршшĕ хушăнни,
Шăвать çапах-ха хĕл çуни.

Çуралнă кунăм нарăсра,
Пур ырă туйăм ман ăсра.
Йалт-йăлтăр тĕс кӳрет илем,
Эп хам та ыррине пиллем.

*1999 ç.*

## ПĔЛЕС ТЕТПĔР

*Шӳт*

Вырăсла сăмахĕ — «сплетня»,
Чăвашла — «çынна çини».
«Эс илтрĕн-и, пĕлетни?..» —
«Тет» юртать таçта çити.

Иккĕн-виççĕн пухăнсассăн,
Чей ĕçме ларсассăн та
Кĕшĕклетпĕр ялăн-кассăн;
Сăмахна тыт хăвăнта.

Халь апла-и е капла-и —
Ирĕк-уççăнлăх самант.
Хамăрах ăста, калам-и:
Çын ăшне кĕрсе тухма.

Ăçталла ирпе вăл утнă?
Мĕншĕн тухнă вырăнтан?
Илтнĕ, курнă, сăмах тунă,
Чĕлхе çивĕç — вăркăнтар.

Пĕлес тетпĕр, пĕлме кăсăк,
Ним ан юлтăр вăрттăнра.
Лĕпке пулмĕ тăрри шăтăк,
Юлмăн катăк ăс-тăнран.

Элеке валли çул уçă,
Пух та сар эс пур çĕре,
Тĕрлĕ пулăм ку тăруçăн
Хăлхара йÿçсе çĕрет.

Пуçлăхсем пирки сăмахĕ
Е апла та, е капла:
Мĕншĕн курăмлă сăхманĕ,
Мĕншĕн вăкăрĕ мăкла?

Çынна хăвăрт тĕп тумашкăн
Элек вăйлă хĕç-пăшал,
Суйлавсем çитсессĕн акă
Тем те илтĕпĕр кăçал.

*1999 ç., пуш*

## ÇĔНĔ ПӲРТ ĔÇКИНЧЕ

Тăванăм, тăванăмăр,
Никĕс хывайрăмăр,
Тăванăм, тăванăмăр,
Çурт купаларăмăр,
Тăванăм, тăванăмăр,
Тăрă витейрĕмĕр,

Пĕрле пухăнайрăмăр,
Ăсрăмăр сăра.
Тав пур сăра!
Тăванăм, тăванăмăр,
Шӳрпе сыпайрăмăр,
Юрларăмăр, ташларăмăр
Çĕнĕ пӳрт ĕçкинче.
Тавах сире!

*1999 ç., çĕртме*

## СУЙЛАВ УМĔН

*Шӳт*

Пуштă ещĕкĕм кăçал
Вунă уйăх пуш-пушахчĕ:
Киоскра хаçачĕ ман –
Вуламасăр хăварман.
Чим-ха, пăхрăм та паян –
Ещĕк пирĕн лăк тулли:
КПРФ, «Яблоко»
(Чăвашла, ăнт, пан улми),
ЛДПР, темĕн те пĕр –

Тěрлě партин йăл кулли.
(Пулас-им-ха ял кулли?)
«Эпě, — тет кашни хěрсех, —
Ырă пурнăç паракан.
Суйлава пырсан пěрех
Маншăн сасăла шăпах».
Хучě лайăх, тěрлě тěслě,
Елка теттишěн пит меллě,
Вут чěртме те вырăнлă,
Тепěр çěрте те усăллă.
Шухăшлам-ха, шухăшлам
Тăрри шăтăк пуçăмпа:
Хăшě чăн-чăн маттурри,
Иртен ěмěр юлашки?
Хăшě пулас ěмěрěн пěкки?

*1999 ç., раштав*

* * *

*Илья шăллăма*

Илле кунě çитеспе,
Мăйăр вăйлă пулнă çул,
Пěр çумăрлă кунхине
Çурла хурсах ěç çинче
Лавпах кайнă вăрмана
Мăйăр татма канмалла.
Шăпах вара çавăн чух,
Каçа юлсан ир енне,
Шěшкě тураттипе çинче
Аннÿ тупнă-çке сана,
Илья ятлă ывăла.
Акă ěнтě унтанпа

Ч-42655
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Тулчĕ шăпах 60 çул.
Ырлăх, сывлăх пил сана!

*2000 ç., утă, 26*

* * *

Аттен шăллĕн хĕрĕ
Аля-Алевтина,
Ĕмĕр вăтинче эс
Килтĕн тĕнчене.
Тӳпере пур теççĕ
Çăлтăр кашни çыннăн,
Санăн вăл çиçтĕр
Пин çулсем иртиччене,
Пра-пра-пра мăнуксем
Чĕрçӳнте сикиччене.

*2000 ç., çурла, 12.*

## ПУЛЛА ТУХСА ЛАРТĂМ

Пĕве шăнса ларчĕ,
Пăр йăлтăр çиçет.
Пулла тухса лартăм
Çут «кантăк» çине.

Шыв тăрă, кур витĕр:
Уланкă ишет,
Ăман-и халь çитĕр —
Пăхса çеç иртет.

Вак куçĕ çуталчăк,
Вылят вăлтуна.

Мĕнле-ши улталăн:
Суять вăл, тунать.

Ак хыпрĕ, ав, туртрĕ
Пит ырă партас.
Куçпах хăв куратăн
Куна-и тартас?

Тытатăн пĕрне эс,
Унтан – тепĕрне...
Кун иртнĕ, сисмен те.
Уттартăм киле.

*2000 ç., чӳк, 23*

## ПИН ÇУЛЛĂХ

Хăçан пуçланнă-ши этемлĕх
Хĕвел çутиллĕ Çĕр çинче?
Шута илмешкĕн пултăр меллĕ
Пĕр эра, тепĕр эра тенинче.

Кăлтăртатсах-çке çаврăнать шав
Çавракăш хăйĕн еккипех,
Сехет йĕппипелен канашлăн
Кун-çул иртет пит сиккипе.

Çĕр çул тени кĕске те вăрăм
Тĕнче шайпе танлаштарсан,
Вăхăчĕпе çитсе те тăрăн –
Юлма пач çук юлăнтарса.

Тулать эрне ҫич талăк хыҫҫăн,
Вун икĕ уйăх — пĕр ҫулта;
Унтан каять шут умлăн-хыҫлăн —
Вунна, алла ҫĕнме пултар.

Ҫĕн ĕмĕре ҫапла ак кĕтĕн.
Ҫĕр ҫул мĕнскер? Пин ҫул хыҫра!
Ҫуралнă, ӳснĕ ватă-вĕтĕн
Пайтах шăпа пин ҫуллăхра.

Ăспа виҫсе кунне кунлать ҫын,
Тымар ан юлтăр татăлса.
Ăрупала ăру калаҫнăн
Ҫĕнни пуҫ тайрĕ ватăлла.

Пире мĕнскер? Вăй-хал ҫеҫ пултăр —
Шавах утатпăр малалла;
Хĕвелĕмĕр ялан йăл култăр —
Пĕр ĕҫ тытатпăр ик алла.

Чăн тӳпере пин ҫăлтăр йăлтăр;
Ӳсен-тăран — ҫĕрте-шывра;
Чĕр пурнăҫ ырă, чăлтăр-чăлтăр,
Телей тени — ҫĕрте-кунра.

*2000, раштав, 26*

## КАМСЕМ-ХА ЭПИР...

Камсем-ха эпир ҫĕр ҫинче пурăнатпăр?
Мĕскер-ха капла хĕн курать пирĕн йăх?
Лаша ҫул ҫинче чĕлпĕре ҫеҫ ан таттăр —
Ҫапла-и калатпăр ӳт-пӳ чĕрĕ чух.

Ҫӗн кунра ҫӗнӗрен ҫул-йӗр хывăпăр
Шав малалла ыткăнса пымалла.
Пурнăҫӗ пулӗ пурин те ыр сывлăхлă,
Пурӗ пӗрех ӗҫ тытатăн алла.

Уй-хирӗ, шыв-шурӗ илемлӗ те капăр,
Ҫынна тăрантарӗ ялан тимлесен.
Ӳксен те тăмашкăн Турри ҫеҫ вăй патăр,
Хӗвелӗ ҫутаттăр пире хӗмленсе.

Тăшман-и юнанă – хӗҫпе хӳтӗленнӗ;
Сахал-и ҫухатнă чи ҫывăх ҫынна.
Тиран та тӳре пайтах хӗсӗрленӗ –
Ҫут ӗмӗт ҫапах хамăрта пурăнать.

*2000, раштав, 27; 2001, юпа, 23*

* * *

Илья шăллăмăн, Нина кинӗмӗн
Ывăл авланать.
Туй хисеплӗн ай-хай килтӗмӗр
Эпӗр хăнана.
Ҫӗн ӗмӗрӗн ҫӗн ҫулталăкӗ
Утпа ыткăнать.
Вовăн, Людăн пӳрт-ҫурт алăкӗ
Умра уҫăлать.
Ăру хыҫҫăн ăру сыпăнтăр
Шавах малалла.
Вовăн, Людăн хӗр те ывăл тупăнтăр
Чун юратмалла.
Телей ҫине телей пултăрин
Кун-ҫул тăршшипе,

Ачи-пăчи киксе култăр-и
Кил-йыш ăшшипе.
Чашăк-тирĕк шăкăрт-шăкăрт
Пулĕ хăш чухне –
Тухса ӳктĕр хĕврен шакăрт!
Хыт чул çĕр çине.
Вова, Люда, ыррăн-шуррăн
Пехил-пил сире,
Вăрăм çулăр туслă пултăр
Ан манăр пире.

*2002, пуш, 2*

## ÇӲЛЕ ÇĔКЛЕН ЭС, «УРОЖАЙ!»

*«Урожай» спорт обществине*

Ăрша чупать çу кунĕнче
Тăван уй-хир ытамĕнче;
Пуçне таять тулли пучах –
Кăмăлăмра ырри анчах.

Пучах çине пучах – кĕлте,
Ырашĕ, тулĕ – пур килте;
Ĕçре вăй-хал туптанă май
Чăн ячĕ пулчĕ «Урожай».

Спортра пĕрлешнĕ ушкăнра
Пĕри пит çуттăн ялкăшать.
Ан кулянсам кая юлсан,
Эс хăв та пырăн ыткăнса.

Хĕлле уй-хир – шап-шурă юр,
Çил çапасран вăрманĕ пур.
Ку хутлăхри çӳл Йăлăмра
Пайтах эп пултăм вăйăра.

Унта çӳрерĕм йĕлтĕрпе
Ытти нумай йĕкĕтсемпе.
Сăрта хăпар та анса кай,
Ялавĕ пирĕн – «Урожай».

Утайрăм тĕрлĕ хулара,
Унтан – ытти çĕршыв таран.
Утни-чупни вăл – хăй тĕнче
Пучах хăмачĕ айĕнче.

Умри кун-çул, çĕн ĕмĕрте
Пуçтар татах тулли кĕлте!
Пурнать-ха ял, сывлать пĕр май;
Çӳле çĕклен эс, «Урожай!»

*2003.11.28*

* * *

*Нина кинĕмĕре 55 çул тултарнă май*

Сурăм шывĕ хĕррипе
Ешĕл улăх та вăрман.
Юлăш ялĕн хĕр-пике
Йăрăс пӳллĕ-çке – аван!

Çу çитсессĕн ян та ян
Тĕрлĕ кайăк юр юрлать.

Кĕвĕ шăпчăкăн пуян,
Ырă кăмăл ун пурах.

Ашшĕ-амăш ку хĕре,
Нина ятлă хунине,
Шăпчăк тенĕ те пĕрре,
Халь те кайăк чăннипех.

Икĕ ывăл, ай! хастар;
Люда кин те пĕр пăрчкан;
Ав, мăнук чупать вăр-вар.
Менельник сан — лар та кан.

Ватлăх шучĕ сиккипе
Килчĕ-тăчĕ кăрлачра.
Çĕр çула çитсем чипер,
Нина кин, ыр пурнăçра.

Тепĕр кин те пултăрин,
Кĕçĕн кин те кĕтĕрин,
Ывăл та хĕр пӳрт тулли
Саншăн пулччăр ыр сунни.

*2004 ç., кăрлач, 3*

* * *

Хĕл варринче пулла эп кайрăм,
Ларатăп хулăм пăр çинче.
Ял айккинчи çак ырă айлăм
Телейлĕ мар-и пуринчен?

Кунтан иртет тӳртен тап-такăр
Ĕçе ялан çӳрен сукмак.

Пулли кӗменшӗн пит ан макӑр —
Касчен тулайӗ пӗр такмак.

Йӑлтӑртатса хӗвел пӑхсан та
Кун сивӗ; эсӗ — хӳтлӗхре.
Ҫӳл тӳпере вӗҫен ҫӑхан та
Ҫӗтмен-хӑпман-ха ют ҫӗре.

Ула курак та кун кунлать ав,
Уланкӑ уншӑн тӗш апат,
Сан ҫумӑнтах выртан пулла вӑл,
Сисместӗн хӑв та, — йӑкӑртать.

Йӗри-тавра кӗрт хулӑм, хумлӑ,
Кичемленме ним вӑхӑт ҫук...
Пӑра йӑтса эс питӗ сумлӑн
Пулла тухсам канма хӑш чух.

*2004.1.12*

## ТӐВАН ТУРАТ

*Иккӗмӗш сыпӑкри Борис шӑллӑма*
*мӑн менельник ячӗпе*

Хунав шӑтса тухать-и пӗрчӗрен,
Туратланса ихет-и ҫӳлелле —
Эпир те хамӑр ӳснӗ пӗчӗкрен
Атте-аннен, тӗнчен пилӗпелен.

Ҫуралнӑ ҫыннӑн уйрӑм ячӗ пур,
Пӗрне-пӗри пӗлетпӗр ял-йышра;
Тӳсме лексен те тӗрлӗ хура-шур
Шав малаллах пыратпӑр туртӑшса.

Васукăн-Каврăçăн — шутла: аван —
Шăп виçĕ ывăл, виçĕ хĕр пĕрчи.
Атте ман пулнă лăпкă Лариван,
Ун шăллĕсем — Раман та Элексĕи.

Тăшман урсассăн кайрĕç ак тухса,
Кур, ик тăван пĕр харăс пĕр кунра;
Утсем юртайрĕç шав пуçа ухса.
Лексей шăпи епле-ши анăçра?

Çунайрĕ хурçă... Килчĕ çĕнтерӳ.
Аттен, Раманăн пур-ши вил тăпри?
Çуралнисем ӳсеç пĕрех хĕрӳ —
Тăват ача аслийĕн хунаври!

Пичче... Аттен пĕр шăллĕ Элексĕи
Çу кунĕнче çитейрĕ çаврăнса;
Тăван -пĕтен, хĕвеллĕн çиç:
Тепре хунав çĕкленĕ ăнăçса.

Ак Аля çуралать инкен, пиччен,
Унтан Борис килет çут тĕнчене.
Туйсем пулсассăн тĕп йăхăн килĕнче
Турат илем кӳрет Каврăçăнне.

Кун-çул иртет, йăх-несĕл тăсăлать,
Борисăн, Ольăн халь хăйсен турат.
Пăхса паян çĕклетĕп кăмăла:
Мăн менельник Борисăн, тав Турра!

Салам, тăван Борис, салам чунтан,
Телейлĕ пул, телей сан çемйӳне.

Кашнийĕн ыр кăмăлĕ пуртан
Эпир паян кунта кĕрекӳнте.

Юрлар-и те ташлар-и – савăнар,
Туссем, телей, ыр кун, хăват сунар
Васильевăн çип-çирĕп кил-йышне.
Тăнăçлăхра пурнар-и ку чухне.

*2004.2.7*

## ÇУР ЕННЕЛЛЕ ПĂХАТЬ ÇАНТАЛĂК

Ай, сивĕ-çке, хĕл кунĕ сивĕ,
Ăшши пулать сайра-хутра;
Пĕр хушă вĕтрĕ çурçĕр çилĕ,
Паян хĕм куçрĕ кăнтăра.

Чӳречесем шăнса ларсаччĕç
Эрешлĕ, капăр пăрпала;
Паян вара самай тасалчĕç
Хĕвел ӳксессĕн кăнтăрла.

Ача-пăча тухать хаваслăн
Çырма хĕрне, катаччие.
Вăрман, ав, маншăн хăтлă, аслă,
Унта каятăп йĕлтĕрпе.

Çур еннелле пăхать çанталăк,
Кĕçех тумла тухать ташша,
Çĕре хуплană шур шăналăк
Вăшт хускалса чĕнет ăшша.

Курак сасси – çур кунĕн чанĕ,
Епле кĕтет ăна йăмра!
Çӳçе кăчки те чăмăртанĕ...
Юрлас килет ман ăшăмра.

*2004.2.21*

## КИЛТĔШРИ ĂМĂРТУ

Сирень ак шăпах чечек сарнă кунта;
Çулталăк вĕреннĕ, халь – каникула.
Чим, эсĕ тăхта, утар шеп ăмăртса,
Алина Петровна парнишĕн хыпса.

Маттур çăмăл атлет Алина аппа,
Тĕнче чемпионĕ вăл пулнă утса,
Чăваш ячĕ-сумĕ çĕкленнĕ çапла,
Тен, эсĕ те курнăн çут çăлтăр пулса.

Шăмат, Етĕрне, Килтĕше тав тăвать –
Мĕн чухлĕ ача çĕнтерет çӳл тăва!
Ав Элĕк, Вăрмар, Трак енĕ, Муркаш
Килет тупăшма; çĕтсе юлмĕ Канаш.

Çынна тарават чăваш кăмăл йĕркин
Вăй-хал кăларса эс те çиç йăлтăрттин.
Кунтах эп куратăп Олимп уçлăхне –
Ав, Валя,[1] Елена[2]... Мухтав вĕсене!

[1] Валя Егорова – Олимп чемпионĕ
[2] Елена Николаева – Олимп чемпионĕ

Тус-йышăн пĕрлех алран-ал пырасси,
Тар тăкнă пайтах... Ыр кунсемшĕн тавсси!
Нумай çĕршывра медаль илнĕ вĕсем,
Кашни пархатарлă, халь чыс та хисеп.

Ĕшне темеллех Килтĕш шкулĕн пахчи,
Çавра лапамне асфальт хывнă чипер.
Чупса-и иртесшĕн хăшне хăш ачи?
Епле те пулсан тикĕс утăм килтер.

Лариса[3] та Вера[4] — илтетĕн çĕн ят:
Пурах-ха чăвашăн çунатлă хăват.
Алина аппа хăй çуралнă енче
Ӳсен ăрăва пысăк çул пехиллет.

Утатăп ватти — кăмăл уçă пирки.
Çапла сыпăнать сывă пурнăç йĕрки.
Ӳкет хут çине çакă сăвă тĕрки.

*2004 ç., çу.*

## КУНТА ВĔРЕННĔ ЭПĔ...

*Элĕкри И.Я.Яковлев ячĕллĕ вăтам шкул 150 çул тултарнă май*

Кунта вĕреннĕ эпĕ, хам вĕрентнĕ,
Уçайнă, хупнă çутлăх алăкне;
Ăс-хакăлăн ырми суха тĕренĕ
Шав эрешлет пĕлӳлĕх палăкне.

[3] Лариса Софронова
[4] Вера Соколова

Кун-çулĕ ун тапса тăран çăл куçлă –
Ялан таса, çап-çамрăк авалтан;
Çăпатапа тăла сăхман çи-пуçлă
Ача-пăча çӳренĕ-çке малтан.

Пӳлĕмĕсем те тăвăр пулнă шкулăн,
Ытамĕ ун çапах та сарлака –
Таçти-таçти ялтан та ирлĕн-кунлăн
Хутланă, калăн, тунă çĕн ака.

Пĕлӳ лаççи чуна витернĕ майăн
Капмар кермен хăпарнă вăрахран,
Пĕрне кура тепри йышпа тăрайнăн
Хут-кăранташ тытать пин шăпăрлан.

(Кĕпĕрнерен час-час килсе çӳренĕ
Пур енлĕн пулăшма та вĕрентме
Иван тете, шăп Яковлев текенĕ;
Çитменнине май килнĕ çитерме).

Ӳссе çитсен ача алла хут илтĕр –
Тухать хавас хăйне кĕтен çула;
Çапла Хусан, Ĕпхӳ, Мускав та Питĕр
Хапăлласа кĕтеççĕ мăн шкула.

Ай, Шупашкар! Эпир вĕреннĕ тапхăр –
Ик аслă шкулччĕ ӳсĕм телейне;
Паян вара миçе мăн шкул пит чаплăн
Кĕтсе илет ыр Элĕк ачине!

Ялти ĕçчен, мĕн пур ентеш сăпайлăн
Асрах тытать çунатлă вăхăта;

Хăшне ятран калас – çырса çыраймăн:
Тĕнче анин саланнă пин ăста.

Çĕр аллă çул! Сахал-и вĕрентӳшĕн?
Ватăлнисем тухатпăр пичеврен.
Ача-пăча шавах, ав, хĕвĕшӳллĕн
Ăс-хакăла туптать-çке кунсерен.

Классем таса та çутă, хăтлă, сумлă;
Интернетпа тухаççĕ тĕнчене;
Пӳлĕпеле вăй-хал, ав, çума-çумлă –
Тупăшусем ирteççĕ кулленех.

Йĕри-тавра чечек карти тĕп çуртăн,
Утма-иртме тип-тикĕсех асфальт;
Мăнаçланмашкăн чăн тивĕçех те пур-тăр:
Чӳречере хĕвел те кун кунлать.

Кунта вĕреннĕ эпĕ, хам вĕрентнĕ,
Уçайнă, хупнă çутлăх алăкне;
Ăс-хакăлăн ырми суха тĕренĕ
Шав эрешлет пĕлӳлĕх палăкне.

*2004 ç.*

## КĔСМЕНСЕМ ТĂКАТЧĔÇ ЙĂЛТĂР КĔМĔЛ

*Борис Борлена 70 çул тултарнă май*

Кĕсменсем тăкатчĕç йăлтăр кĕмĕл
Атăл урлă ишнĕ-каçнă чух;

Пиччесем сăнатчĕç питĕ тимлĕн –
Тамалама шутламăн: канăç çук.

Атăл урлăш сăвăçăн хăлаçĕ.
Е унтан та пысăкрах-и, тен?
Пач сӳнмест сунтал вучахĕ-лаçĕ,
Йывăра чăтатăн, çĕнтерен.

Халапа шăратрăн, хурçăларăн,
Йĕвенлерĕн, кӳлтĕн урхамах;
Сăмахсем юртсассăн йăррăн, каррăн
Çуралать легенда, чăн ахах.

Лăпланмасть-ха çитмĕлте те сăвăç,
Рифма шӳклеми çыхать куллен;
Тĕс çухатмĕ, хăрмĕ йĕс те шăвăç...
Чĕр вăй-хал сана, Борис... Борлен!

*2004 ç., раштав.*

* * *

Хĕрсем ларма ларатчĕç
Эпир ача чухне,
Тĕр тĕрлесе юрлатчĕç
Савнийĕсем çинчен.

Ăçта-ши халь çав тапхăр,
Ăçта асамлă кун?
Шав умалла пăхатпăр –
Ĕçле те савăн, кул.

*2005 ç., кăрлач.*

## ÇЫРМА УРЛĂ ВЫРТАТЬ ЙЁР СУРПАНĂН

Çырма урлă выртать йёр сурпанăн,
Йĕлтĕрçе йыхравлать хырлăха,
Çитĕн-тухăн унта ырлăха.
Вăйĕ чакмĕ часах çил-тăманăн,
Уй-хирте пит хастар вăл: кас-кас;
Вăрманта çиçкĕнме чун хавас.

Симĕс чăрăш пĕркеннĕ шур фата –
Чăн-чăнах эс пике туйĕнче;
Чипер кайăк, йĕкел шĕкĕлче!
Ыр сунса унпала сăмахлатăп –
Хăй сас пачĕ малтан вăл: «Тавсси!»
Манăн, ав, пур вăйран чупасси.

Хӳтĕре кăшт канса эп тăратăп,
Лăпланса та хаш-хаш сывласа,
Çĕнтерӳ çапла пытăр ăнса
Пĕрин хыççăн тепри çӳл туратăн.
Уяртсан – йăлтăрах кăпăш юр;
Вăй туптавĕн кун хыççăн кун пур.

Мăшăр йĕлтĕр ирпе çĕн йĕр хывĕ
Вăшкăнса эс тухсассăн уя,
Юр кисетункă вĕçлĕ туя.
Чăваш енĕн паха çĕрĕ-шывĕ,
Кăрпăк ӳкнĕ. Епле ырă кун!
Пăхса тăмăн ку чух унăн-кун.

Тыткăнлать çын чунне хĕл ялтравĕ;
Пушă вăхăт тупса пӳртрен тух,
Йĕлтĕрпе ыткăнса вăйна пух.
Сивĕ çилĕн янравлă-çке лавĕ,
Пĕккине вăл хăй çакнă шăнкрав –
Таврара чăн-чăнах ыр курав.

*2005 ç., кăрлач.*

## ХУПАНКИНЕ КУРЛАНКĂ УÇНĂ

Хупанкине курланкă уçнă,
Ачи çĕре ӳкет шăпах,
Уçланкăра ку чух шăпах;
Сар мăйăра пуçтар эс уççăн.
Кĕрхи кунпа ман чунăм киленет –
Палан хĕмленнĕ кĕтнĕ тĕллĕнех.

Чăрăшлăхпа хĕлле иртетĕп,
Йĕкел, ав, кур-ха – шăкăри!
Туратсенче шӳлкемĕн тăтăри.
Кăшт ăшăтсан сăна: йĕкелĕн
Хупанкă уçăлнă янках,
Вăрри юлман унта пачах.

Шыв-шур иртсе çĕр ăшăнсассăн
Чĕр вăрăран шăтать калча,
Пулли те кĕç сапать вăлча;
Çурхи тĕнче юрлать пин саслăн.
Эп тухаймастăп хамăр пахчаран –
Лартатăп шĕшкĕ, чăрăш кăмăлтан.

*2005 ç., кăрлач.*

## КĔМЕ ЧĔНЕÇÇĔ ПАРТИЕ
*(Шӳт)*

Кĕме чĕнеççĕ партие
Шавах ватти йышне-шутне.
Хаçат та пур иккен ку йышăн –
Кĕрешĕве тухма ан ман,
Утас-çӳрес çул такăр мар –
Хастар тăрсам эс хамăр çыншăн.

Эп тахçанах-ха пенсире,
Çăкри çитсен пырать пире;
Ларам-и пĕр кана халь шăппăн.
Ялан спортра çӳренĕрен
Уйрăлаймастăп çав чиртен,
Утас-юртас хевтем пит лăпкă.

Ман опыт та, пĕлӳ те пур,
Мала тухма вăя çеç хур –
Çамрăксенчен тăрса юлатăп.
Çапах перес-и талпаса?
Иртни килеймĕ таврăнса,
Вĕçеймĕн ĕнтĕ тек хăлатăн.

Юрать, халь хамăр хушăра
Вăя виçетпĕр хушăран –
Чун канăçне çапла тупатпăр.
Кăвар туртан пирн алăпа
Ĕçне тăвать ку чух шăпах.
Куçа чарса çавна сăнатпăр.

*2005 ç., нарăс, 1.*

## ÇУРАЛНĂ КУН-И САН ПАЯН?

*(Шӳт)*

Çуралнă кун-и сан паян?
Çуралнă кун!
Тăванлă кун-и ман паян?
Тăванлă кун!

Мĕскер пит тилмĕрсе пăхан?
Телей çеç сун!
Хама-им тĕмсĕлсе сăнам?
Хĕвеллĕн çун!

Халь миçере эс, миçере?
Хампа пĕрлех!
Ыйтап пĕлессĕм килнĕрен.
Теме кирлех.

Чупса иртеççĕ пирн çулсем...
Паян эп пур!
Хăна-вĕрле-и? Килĕрсем!
Тăван — эп, кур!

*2005.2.5*

## "РАÇÇЕЙ ЙĔЛТĔР ЙĔРĔ - 2005"

Йĕлтĕр йĕрĕ мăн Раççейĕн
Вăрăм тăсăмлă хĕлле,
Ывăл-хĕрĕ хамăр енĕн
Вăшкăнать çеç çиçĕмле.

Атăл çумĕ – лăпкă Йăлăм –
Йăрăс чăрăш, çӳллĕ хыр;
Яш чухне сахал-и пултăм –
Ярăнса хастаррăн пыр.

Сăрчĕ чăнкă – анăн çăмăл,
Улăхма самай вăй хур!
Çĕкленет-çке çамрăк кăмăл:
Кĕрешме хавалăм пур.

Иртрĕ-юлчĕ Йăлăм енĕ,
Пухăнма халь хăтлă парк;
Ял-хулан хăпса килейнĕ –
Тытăçайăн пакапар.

Шур сухал ӳссен те ватă
Йĕлтĕрне хуман таçта –
Антăм-антăм пит хăватлăн
Сăрчĕ-тăвĕпе каçса;

Юлмăп-и кая – сивлемĕç
Ташă-юрăллă кунра.
Çирĕм пилĕк пин çын терĕç
Эпĕр çиçкĕннĕ кунта.

*2005.2.14.*

## СИВĔ ÇИЛĔН ÇĔР ПĔР ХĔЛĔХ

Вырăс çĕрĕн – вырăс хĕлĕ,
Чăвашсем ун варринчех,

Сивĕ çилĕн çĕр пĕр хĕлĕх –
Туйăн-пĕлĕн çийĕнчех.

Ачашлать-и, хĕрхенет-и?
Тăм илтерĕн туххăмрах.
Лăпкăн вĕрĕ – киленетĕн;
Хирĕн кĕвĕллĕ тăмра.

Ахăрать те, çухăрать те,
Шăхăрма та ӳркенмест;
Юр вĕтетĕ – йăлт тухатĕ
Шăйăн-шайăн сиктĕрмен.

Ялăн-çуртăн, мăн вăрманăн
Тĕрлĕ сасă хăлхара –
Ирлĕ-каçлă çил-тăманăн
Ӳлесси те хушăран.

Пытăм эпĕ çулсăр-мĕнсĕр
Йĕлтĕр шунă вăйăмпа,
Çырмана та антăм тĕлсĕр –
Шур юр пур пĕр ашăмпа.

Хир чăххи пăр-пăр вĕçейрĕ...
Те хăратрăм? Ан ятла!
Сывлăха пуспа виçеймĕн,
Сасă-чĕвĕ ыр шутлах.

Вăрманта ик-виçĕ кайăк
Ташă çемĕллĕн вĕçет.

Çавăнса тухса эп кайăп,
Хам та юрлăп ак кĕçех.

*2005.2.18.*

## ЭПĔ ПУР ПĔР – ЙĔЛТĔРПЕ

Вăрман каснă, йăвантарнă,
Пĕренелĕх – йĕркерен:
Вăхăт çитнĕ, кирлĕ пулнă;
Темшĕн пур пĕр хĕрхенен.

Мулкач сикнĕ, йĕрне хывнă,
Ката çумĕн ирпелен;
Тытас çук эс, пулмĕ хăвăн;
Темшĕн пур пĕр хĕпĕртен.

Ăмăртать, ав, яшĕ-хĕрĕ
Такăрлатнă çул-йĕрпе;
Мала тухмăп, юн ман хĕрмĕ;
Эпĕ пур пĕр – йĕлтĕрпе.

Чăваш çĕрĕн юр пит хулăм,
Хĕлĕ вăрăм самаях;
Ĕçлĕ çыннăн урăм-сурăм
Çўремешкĕн кун çуках;

Е пăхать вăл выльăх-чĕрлĕх,
Е кĕçех тухать пулла.
Пурнăç тыткăчĕ – ыр пĕрлĕх,
Аталантăр ял-хула.

*2005.3.6.*

## ÇĂВАРНИРЕ ĂСАТНĂ СИВ ХĔЛЕ

Çăварнире ăсатнă сив хĕле;
Çуна пит капăр пулнă ку тĕле;
Хĕрсем-яшсем туй-шилĕклĕн çӳренĕ,
Пĕрне-пĕри ыр суннă яланах.
Йăли-йĕрки ял хыççăн ялăнах,
Пуçне ухса юртма пĕлет çӳренĕ.

Манман-ха кивĕ çемĕ техĕмне,
Ӳсен ăру кăтартĕ хăй хĕмне:
Шăнкăравпа килеççĕ лавăн-лавăн
Вун-вун ялтан кĕрнеклĕ лапама,
Пар лашана тивет пуль çул пама.
Чĕре хавас тапать ку чух уявлăн.

Илемлĕхе куçпа виççе илми
Ташша чĕнет хут купăсăн çемми;
Чипер хĕрсен саламĕ – юрă-кĕвĕ;
Курса хакла кунта ăсталăха.
Мухтас килет ман хамăр халăха:
Тар кăларса ĕçлет вăл çăвăн-хĕлĕн.

Паян – уяв, мăнаçлă Çăварни,
Хĕле хыçа ӳпкевсĕр хăварни.
Шăнкăртатса кĕçех ак шыв та юхтăр,
Хĕвел çинче пăслантăр тăвайкки,
Ешĕлленсе вăй илтĕр çур аки;
Кун хыççăн кун умра пехетлĕн чуптăр.

*2005.2.28.*

## МАРТ ÇИТРĔ-ТĂЧĔ...

Март çитрĕ-тăчĕ. Пуш вăл, хамăрла.
Паян вара килпетсĕр çил-тăман;
Юр ирĕлме пачах та тытăнман;
Кĕрте ашса утатăн кăнтăрла.
Хĕвел кăштах курнать-ха хушшăн-хушшăн.
Çур еннелли хавха – пур чĕрĕ чуншăн.

Чана вĕçет, ларать турат çине;
Çерçи те – чĕвĕл-чĕвĕл, сиккелет:
Апат тупмашкăн шанчăк иккĕлле;
Чăх картине уçатăп та, тинех
Пăр-пăрлатса кĕреççĕ умлăн-хыçлăн –
Яра куна ирттермĕç тутлăн-выçлăн.

Курак сасси! Ăçта эс? Инçетре!
Юр йăшайсан пуçлать туйне тума.
Йĕлтĕрĕмсем пăрахмĕç-ха шума,
Пулла та тухăп-утăп теплерен:
Ку тапхăрта хастар ишет уланкă;
Вăрман енче хăлаçланать шаланкă.

Мартри уявшăн, чунăм, хĕпĕрте:
Тĕнче сума сумлать хĕрарăма –
Телей курса татуллăн пурăнма
Çак тĕрлĕ енлĕ кăткăс ĕмĕрте.
Тăман кашти пат татăлтăр та антăр,
Кас-кассăн çил тамалтăр-и те кантăр.

*2005.3.1.*

# МЕДАЛЬ ПАРАÇÇĔ ПИРĔН ЎСĔМЕ

Юбилее сумланă çутă паллă –
Вăр çавракa та йăрăм лентăпа;
Çынна хисеп тăваççĕ ырăпа –
Фронтри, тылри пĕрех шăпаллă.
Медаль параççĕ пирĕн ўсĕме,
Поэт сасси вăрантăр ку чухне.

Пĕри ун чух тўрех вута кĕрейнĕ
Çарти чыспа сыхра тăрайнă май:
«Фашист, тăхлан çăтса эс чыхăн, кай!»
Чакма лексессĕн те çĕнтерў килейнĕ
Тăвата çул пырайнă вăрçăра,
Тĕнче кисреннĕ, çуннă вăхăтра.

Эпир, ачсем, тылра ўсейнĕ хăвăрт,
Шăп вун çулта тухайрăм сухана
Тантăшăмпа; кĕтетчĕ те ана.
Колхоз уй-хирĕ пулчĕ-тăчĕ хăвăн.
Ялан ĕçре: ўстернĕ тыррине,
Иксĕлтермен çĕршывăн пўлмине.

Вырма чухне анне чуна çĕклетчĕ
Ыр сăмахпа та ăшшăн мухтаса;
Юхатчĕ тар питре шăпăртатса.
Тулатчĕ майĕпен колхоз кĕлечĕ.
Арçын ачсем вăйпа тĕреклĕрех,
Хĕр пĕрчисем те пирĕнпе пĕрлех.

Паян вара мĕнле йыша куратăн?
Пирн аннесем çук, кайнă тахçанах;

Ят-сум тени упранĕ аванах.
Фронтра пулнипеле пĕрле ынатлăн
Кăштăртатса тухать медаль илме
Халь эс пĕлен ача та хĕр-пике.

Çулла, хĕлле пĕр вĕçĕмех тимленĕ,
Çĕнтерĕве шанса, кĕте-кĕте.
Çав паллă кун çитерчĕ ĕмĕте.
Ак пысăк юбилей! Чун хĕлхемлĕ.
Поэт, çырсам-ха сăвă виç йĕрке –
Медаль параççĕ пирĕн ӳсĕме.

*2005 ç., пуш.*

## ТУЙ КӲМИПЕ КИЛЕТ ШЫВ-ШУР

Васках кая пуçларĕ юр,
Хĕвел хĕртет шăрантарсах;
Туй кӳмипе килет шыв-шур,
Уй-хир яри куç уçтăрах.

Çĕр пăсланать, канать кăштах,
Вăл пĕтĕ, йывăр çын, ачаш.
Калча туять ăшша вăштах,
Йăшт çĕкленет, чăн ыр ача.

Вăрман хураччĕ-ха малтан,
Хуллен, ав, вăл та чĕрĕлет.
Ыйхи хресченĕн çăмăлран
Çĕр шуралать кăшт тĕрĕлле.

Акать çын тырă – тухăça,
Пăхать вăл выльăх-чĕрлĕхне,

Çу каçипе те канăçа
Тупаймĕ пурăннă чухне.

*2005 ç., ака.*

## ЙĂВАЛАНАТЬ КӐЛ ÇИЙĔН ШУР ТĔТРЕ

Йăваланать кӳл çийĕн шур тĕтре;
Карас туртать-ши терĕм илĕм-тилĕм,
Çул юрттипе эп çитрĕм-килтĕм –
Хăмăшлăхра лармашкăн пит хитре.

Йăпăртатса иртет ĕнерхиллех
Ман çумранах хăп-хăмăр чăмăр кайăк,
Сар çиплĕ шерепе кăштах пуç тайнă;
Тавра выртан каçалăк – ыр килех.

Хĕвел – çӳлте, шыв тикĕс, хумсăрах;
Чăнккам хулкка курнать пит илĕртӳллĕ,
Леш çыранта çӳçе пур – йăпăш пӳллĕ...
Туртать, кунтах туртать ав хушăран.

Çил вăшăл-вăшăл вĕрчĕ, чупрĕ хум;
Ташлать вăлта палли, япшар чӳхенчĕк,
Курсам: ăна темскер лапах ӳкерчĕ...
Çатăлтатса килсем, кĕтейнĕ сум!

Туртма пăрахрĕ, çитĕ пуррипе;
Тавралăха пăхса килен пĕр хушă;
Хăш чух пулать вăлти те, чун та пушă,
Çапах иртет пирн пурнăç сиккипе.

*2005.9.5.*

## ЮРĂ УЙĔ

Юрă уйĕ капăр Шупашкарăн –
Атăл çумĕн заливпа кăшкарлăн;
Сăрчĕ тăрăх йывăççем чу! кайнă,
Тикĕс çулĕ авăнса чупайнă.
Ыткăнса пымасть-и анлă уçлăхпа
Çивĕч те кĕрнеклĕ чип-чипер пăлан?

Чĕвĕл-чĕвĕл шăпчăкĕ, чĕкеçĕ
Йыхравлаççĕ, илĕртсе чĕнеççĕ –
Кашниех хаваслăн утĕ, чупĕ,
Таталаймĕ, çĕтмĕ спортăн çулĕ –
Ăмăрту иртет, кур-ха, час-часах
Пур тĕнче, Европа шайĕ таранах!

Эпĕ хам кунта самай утайрăм,
Вăрăм хушă çут шыва пуç тайрăм;
Савăнса чунтан хыт çупрăм алă –
Хамăр ен спортсменĕ пулчĕ паллă.
Çутă çăлтăр çиçтĕр пирĕн тĕллĕнех,
Шăпăл-шăпăл Атăл шывĕ, киленех!

*2005 ç.*

## ЫР ВАТЛĂХ ТĔЛКĔШТĔР ПИРТЕ

Кĕрхи хĕвеллĕ лăпкă кун.
Çил вăштăр çеç, кăшт уçăлмалăх.
Вăрман хĕрри – чăн ылтăн алăк,
Чун канăçне кĕретĕн кур.

Ял çумĕпе, анат енче,
Пĕве выртать питех татуллă.
Хур-кăвакал ытла та тулăх.
Пулла эп килтĕм ир çинче.

Ваш-ваш çунат сулса умран
Хăпарчĕ, вĕçрĕ сарă акăш,
Алпа сĕлтетĕп акăш-макăш...
Çăрттан шикленмĕ мăн хумран.

Куçлатăп ыррăн савăнса.
Вăлта хулкки хăй илĕртӳллĕ:
Чăмать, сикет вăл çĕкленӳллĕн.
Ĕç-хĕл пырать ай-хай ăнса.

Вун пĕрпелен ляплан хăвах.
Шур хурăн сарă шӳлкемеллĕ.
Мана лармашкăн шутсăр меллĕ.
Çумра саркаланать хăва.

Çулла тар тăкнă уй-хирте.
Кĕр мулĕ пысăк, пуçтаруллă.
Этемĕн пурнăç ылмашуллă.
Ыр ватлăх тĕлкĕштĕр пирте.

*2005.10.18.*

## ХĔРТСЕХ ТĂРАСШĂН ЭПĔ ХĔМ-ВУТТА

Вăрман хушши — килпетлĕ тӳрĕ çул,
Сенкер асфальт тип-тикĕс, ăнтăлуллă;

Утма-чупма кунта питех татуллă;
Машинăсем сайра иртни те — мул.

Сехет йĕппин сасси ура пуссин,
Кăшт хулăмрах кăна-и: тăп-тăп, тăп-тăп...
Хаш-хаш сывланă майăн — тăк-тăк, тăк-тăк...
Çапла утнин пурах-ши-ха усси?

Шăм-шак туять хăйне питех йăлттам.
Çулла пите лекет шух сулхăн варкăш,
Çурла-кĕрле çӳлтен иртет хур акăш.
Ыр туйăмпа эп хыттăн ăнтăлам.

Вĕлтрен тăри çăра шĕшкĕлĕхре
Çий-çийлетсе юрлать мана вăй панăн,
Яштак пӳ-силлĕ ăвăс тус-тăванлăн
Алне тăсать илемлĕ пĕрлĕхре.

Тĕнче тӳпи-арки тĕтрелĕхре кăна,
Çапах теме кĕтсе шав утăмлатăп,
Чун кĕвве пе тӳр тăрăха куматăп.
Вăрман сывлать ăш пиллĕн лăпкăнах.

Спорт мелĕ теççĕ çак чипер утта.
Мĕн чухлĕ ят ку енĕпе мухтавлă!
Пулать хăш чух хаклавĕ шавлă-тавлă...
Хĕртсех тăрасшăн эпĕ хĕм-вутта.

*2005.11.7.*

* * *

Пит тăнăç кун, вырсарнире,
Пур йывăç капăр чух шăп та лăп,

Сап-сарă мăйăр пуçтаратăп
Кĕрен çулçа сире-сире.

Пĕр йăпăрт хушă вăхăтра
Ки-как, ки-как сасса илтетĕп;
Хур кайăк, ав, ытла çӳлтен-мĕн
Вĕçет-иртет-çке кăнтăра.

Хĕл сивĕ килĕ-ши тесе
Чĕр çекĕле пăхса юлатăп,
Çунат сулма вăй-хал сунатăп.
Тӳпе яп-янкăр — шуç тĕслех.

Çӳлтен вĕçен каять инçе.
Анса ларма пулать-ши шурлăх?
Миçе çĕршыв чиккийĕ урлă
Иртет-ши янкăс сас çинçен?

Хунавлăхра эп, шăплăхра.
Темле пит ырă манăн кăмăл.
Кĕрхи кунра шăм-шак те çăмăл.
Тата мĕн кирлĕ ватлăхра?!

*2005.11.15.*

* * *

Çĕлен ăшши вăл — авăнра
Хура кĕре çывхартнă пусăм,
Чаксах пырать-çке шывĕ пусăн
Кунсем кĕскелнĕ вăхăтра.

Тĕтре тăрать шав ирсерен;
Çулçăсăрах юман та шĕшкĕ,

Уй-хир сывлать ĕшеннĕ тĕшлĕн;
Хытах шăнтать хутран-ситрен.

Ак витĕнет пĕве пăрпа,
Пулла тухать малтан пĕр ватă
(Асăрхансам, атту чăматăн!),
Ача-пăча кĕç — тăркăчпа.

Ман çук-им хĕллехи вăлта?
Ӳксе çухалтăр ӳрĕк тунсăх.
Пулли лексен пĕр пилĕк пуслăх
Алла çупам-и кăмăлтан!

*2005.11.21.*

* * *

Măн вар хĕрри ашса пырас çулра.
Кăп-кăпăш юр. Шур хурăн ретĕн-ретĕн.
Пĕве çине асăрханса кĕретĕн.
Юлташ юр юрласа ярать çумра.

Хальччен килменччĕ çакă айлăма.
Кӳл çаврăмне куçпа виçсе пăхатăн.
Çунаттине сарса вĕçен хăлатăн
Курнать таппи. Хуллен ӳкет тăман.

Çич-сакăр пулăç шăтарать пăра.
Вăлта çипне хастар çапать уланкă.
Сунарçăна кунтах кĕтет уçланкă.

Măн çул енчен сас-чĕв килет вăрах.
Çулла та çитĕп ку улах çĕре.

Шур хурăн речĕ юрлĕ шĕнкĕр-шĕнкĕр
Çулçи вылянă майăн вĕлтĕр-вĕлтĕр.
Пулли ун чух карас кĕрет.

Эп хам та лартрăм хурăн пахчана.
Ӳссен илемĕпе чунтан киленĕп,
Пулла кайсан туллипеле килейĕп,
Çĕн милĕкпе уттарăп мунчана.

*2005.12.23.*

## ЙĔЛТĔР СЫР ТА ЯРĂН ХĂВĂРТ

Çĕнĕ çул-и? Çитрĕ, иртрĕ!
Сурхури те юлчĕ хыçала.
Уй-хире шап-шур юр витрĕ.
Тĕрĕслер-и хамăр вăй-хала?
Хĕлĕн анлă инçĕшĕ –
Çыннăн сывлăх пиччĕшĕ.

Йĕлтĕр сыр та ярăн хăвăрт
Такăрлатнă хăтлă çулпала.
Килĕштернĕ мел сан хăвăн:
Тăркăчла пит хыттăн чупмалла.
Хӳхĕм йĕлтĕр пластика.
Ĕмĕрхи мел – «классика».

Йывăç йĕлтĕр пур ман хамăн
Кĕшĕл-кĕшĕл юр чухне ашма.
Тăркăчла мелпе чăлханăн,
Кирлĕ мар-тăр уссăр тавлашма.
Тăчĕ-юлчĕ пластика
Ырă мел çав «классика».

Мăшăр йĕр касса кăларнă
Ăмăртмашкăн тепĕр инçĕшре.
Кашниех кунта ят панă!
Хăшĕ вăйлă çакă тĕлĕшпе?
Сан та, ман та — пластика,
Мелĕ халĕ «классика».

Спорт тенин нумай çав енĕ.
Йĕлтĕрпе чупма вĕрен.
Кăмăл-туйăм йăлт! çĕкленĕ,
Ан хăра эс çатăр сивĕрен.
Хĕлĕн вăрăм инçĕшĕ —
Чăн-чăн сывлăх пиччĕшĕ.

*2006.1.10.*

* * *

Пысăк сивĕ килчĕ кăрлачра
Сисĕнчĕксĕр, хăвăрт, питĕ шуххăн;
Пӳртӳнтен эс кăпăр-капăр тухмăн —
Выльăх-чĕрлĕх пур-çке картара!
Тин кăна пранланă качака
Хуçинче курать-çке шанчăка.

Мăк вите шутланмĕ хулăм чул,
Çитĕ тенĕ, пултăр кăшт хуралтă,
Кăштăр алă хăш чухне хуралтăр;
Ватлăхра ӳсеймĕ пур пĕр мул.
Путексем выляççĕ те пӳртре,
Хĕпĕртӳ çиçсе тăрать питре.

Хунарпа тухатпăр ир те каç.
Шур çамкан чĕнсе-кĕтсе сас çĕтнĕ,

Ун ҫине ҫӑм тутӑр хамӑр витнӗ.
— Ӳпкевпе ытла эс ан калаҫ,
Шатӑр-шатӑр сив куна чӑтах.
Путексем-и? Тухӑҫ хӑв патнах.

*2006.1.21.*

## КАНӐҪ ТАПХӐР

Ку вӑхӑт шучӗ — канӑҫ тапхӑр:
Кӑрлачӗ, нарӑс — пӗр ытам,
Ҫуррипеле ҫурри йӑлттам;
Сивви самай вӗтет-и шатӑр,
Е кутсӑр-пуҫсӑр ҫил-тӑман, —
Чӗр чун ҫыврать-мӗн, вӑранман.

Йӑх-тӗс тӑсма вӑй-хал та кирлӗ.
Мулкач туйне лартать пушра,
Шывра уланкӑ ҫав шутра;
Хирте кӗрт хулӑм, урлӑ-пирлӗ,
Ҫӗре сыхлать вӑл сивӗрен.
Ял-ялӗнче-и — выльӑх килӗрен.

«Миҫе путек туса сан пачӗ? —
Ыйтать пӗри хӑй кӳршинчен. —
Ман хамӑн — тепӗр эрнинче.
Ҫитет утти, ытти апачӗ».
Пранлать-ҫке ҫакӑ тапхӑрта
Ачаш чун, ырӑ качака.

Ту хырҫипе авал ҫӳренӗ,
Пит сыхӑ пулнӑ ку чӗр чун;
Халь те пӑхать вӑл унӑн-кун.

Хуҫи, паллах, ăна кӳренмĕ,
Ҫуркуннепе ҫерем ҫине
Ертсе тухать путексене.

Хĕл варрипе кăрлач та нарăс
Йăх тăсăмне парать ăш пил,
Хăш чух ҫапах вĕрет сив ҫил.
Ёрчев тени килмест пĕр харăс.
Вăшт сулланать ҫырма хăви,
Унта, курсам, куян йăви.

Ман хамшăн та ку вăхăт меллĕ:
Ҫыратăп сăвă е калав –
Ҫĕклем ҫине ҫĕклем, пĕр лав.
Килет хăш кун питех хĕвеллĕ.
Уя тухсан-и йĕлтĕрпе
Пыратăп тилĕ йĕрĕпе.

*2006.2.10.*

## ТĂВАН ЯЛĂМ КАРМАЛ ТЕНИ

*(Ял уявĕ тĕлне)*

Тĕнче ани питех те пысăк:
Континентсем, материксем...
Ăру хушса пырать ҫĕн сыпăк.
Эпир те шутлă, тенисем.

Мĕн чул хула, пин тĕрлĕ халăх
Хĕвел ăшшилле ҫĕр ҫинче.
Ял-ял шутне хисеп тумалăх
Кармал та пур-ха ку енче.

Пăхма-курма тӳремлĕ вырăн,
Ун пĕр енче ик сăрт айкки.
Тури урам, малтан эс çырăн;
Иртсе пыруçăн — Яхваркки.

Шăпах кунта çуралнă эпĕ
Кăп-кăпăш юрлă сив хĕлле,
Ӳсейнĕçем курнах тем те пĕр:
Хури-шуррийĕ — пĕр тĕле.

Ял-йыш карах вăрçа ăсатнă
Аттесемпе пиччесене
Синкер тухсан. Йăх — хăватлă!
Манаймăн эс иртнисене.

Çиме çитмен. Самай чух выçă.
Чăтайнă, тӳснĕ йышпала.
Çулсеренех тӳленĕ хырçă,
Пĕр ĕç тытайнă ик алла.

Çĕршыв сывла пуçланă майăн
Эпир вăй илнĕ эрипен,
Уйран килейнĕ çумăр айăн,
Йĕпе-сапашăн йĕрĕшмен.

Çулла вăййа тухать яш кĕрĕм.
Лаç çумĕнче, ав, вăрăм сак.
Малти урам, юрра эс кĕрĕн
Сăпайлăн, шуххăн ыткăнса.

Ташша çапса кăтарт пĕр хушă
Пĕве кĕрейнĕ тапхăрта;

Чуну нихҫан пулаймĕ пушă,
Курни-илтни — йăлт хăвăнта.

Ҫумри урамăн хăйĕн паллă:
Мăнкун чухне кунта — чучу,
Анатрисем тепрер шăпаллă,
Уничере те пур-ха чун.

Майне пĕлен пухайнă пурлăх,
Ҫуртне илсе тăвайнă шкул;
Тӳресемпе пулаймăн урлă,
Вĕрен, ăс пух та сапăр пул.

Кӳпеш, Хирлеп — эпир пĕр ушкăн:
Тени тавращĕ ултă ял.
Туйсем кĕрленĕ хушшăн-хушшăн,
Питсем ҫиҫейнĕ йăл та ял.

Уй-хир, шыв-шур илемлĕ пирĕн:
Сар хурăн варĕ, Вăрăм ҫут;
Ĕҫре пиҫетĕн каҫăн-ирĕн —
Аса килет-ҫке тепĕр хут.

Тускай. Ăна мĕн калăн?
Самай вăл панă пулăшу.
Пăрнаш уйне виҫетĕн анлăн,
Тыр-пулшăн пырĕ тупăшу.

Хирлеп, Пихлат... Сахал-и вырăн?
Ума тухать, ав, Ĕштенеш.
Хура ҫĕрпе сывлатăн ыррăн,
Хуйхи-суйхийĕ йĕкĕреш.

Йăранарта – çавра мăн кӳлĕ,
Ят-сумĕ ун тавралăхра.
Сума суса тăрать çӳл Пӳлĕх,
Юмах-халапĕ халăхра.

Ку тăрăхран эпир çул уçнă,
Ыр Тенире пирн тĕп тымар.
Вăрман хăлхаллă, уйĕ куçлă,
Киле-çурта, ай, манар мар.

Çамрăксене ватти ăс панă.
Чĕрех-ха çак йăла-йĕрке.
Майĕпенех йăх-тĕс хунанă,
Саватпăр пур те ирĕке.

Тавах, Тени, пире манманшăн!
Эпир манмастпăр, эс ан ман.
Юратупа çат хурăнташлăн
Тулса тăрать халь кăмăл ман.

*2006.6.9.*

* * *

Ейӳ ишсе антарнă çыранра
Йăр-р-р шерепен ӳсейнĕ йыт пырши.
Кĕтӳ анать, тăмасть-ха сулхăнра.
Кать-качакан çимешкĕн мĕн пур-ши?

Çырма кукри. Шыв анлă авăрта.
Йалт çеç сиксе kaçать те мăйрака
Кармашăнать (выртас-им тапăрта?),
Чĕвен тăрать, уямĕ хысака.

Сӑмахлӑ выльӑх кайтӑ качака.
Сахал-и ят тивет ӑна час-час?
Йалт-ялт пулни ӳстерейместь хака.
Пӗччен юлсан макрать: ялан пӗр сас.

«Ӗне ҫукки усрать», — ҫапла хисеп.
Мӗн авалтан тухайнӑ ку чӑна.
Темех тесен те, пур-ха юрлисем —
Шур качака иртет ав ҫулҫӑна.

Ватта ҫитсен кӑштах юр-вар тытма
Ҫак выльӑх пур халь пирӗн картара.
Вӗренлесен утатӑп шӑварма
Ҫулла ҫырма-ҫатраллӑ тапӑра.

*2005.7.25.*

* * *

Ҫумӑр ҫурӗ-и?
Йалт йӗпетрӗ-и?
Утӑ ҫултӑн-и?
Типӗтейрӗн-и?

Ҫитрӗ шӑмат кун —
Туй кӗрлерӗ шав,
Юратса ик чун
Мӑшӑрланчӗ ав.

Евчӗ халӗ ҫук,
Тус-юлташ кӑна;

Кӑмӑл пыл та ҫу —
Савӑнать хӑна.

Килчӗ ҫӗн эрне
Янкӑрах уяр,
Тӑхлачсен хирне
Ут ҫулма каяр.

Вырсарни чухне
Тӗрлӗ ӑмӑрту,
Нацисен кросне
Тухма кӑмӑл ту.

*2005 ҫ., август.*

* * *

Ват ăшши иленнĕ вăрăм улăх
Кĕр çеммин юрлать хăйне кура –
Выльăх-чĕрлĕх йышлă касура,
Сăрт енче те шывĕ-шурĕ тулăх.

Кукăр-макăр çырмара пур авăр,
Шурă кăпăк: шыв юхать кар-кар;
Пулă хыпĕ вăлтана вăр-вар...
– Хулă ман кĕске, ытлах ан авăр...

Тепĕр тăрăх – лапсака çӳл йывăç,
Вырăн хĕсĕк вăлтана яма,
Утăн, куçăн – лекĕ уяма;
Ырлăх-пурлăх пухăнать пĕр ывăç.

Юхăм шыв тĕл-тĕллĕн – шăнкăр-шăнкăр...
Киленетĕп ват ăшшиллĕ кун,
Вăхăт çук супмашкăн унăн-кун...
Сар хĕвел çӳлтех-ха: йăлтăр-йăлтăр.

*2006.11.1.*

* * *

Вăхăчĕпе каллех хĕл ларчĕ,
Пулла тухам-и пăр çине,
Таçтах кайса çӳрес те марччĕ,
Пĕве ялтах çине-çине.

Пур хӳхĕм сад, çӳл йывăç – хӳтлĕх;
Сивве пăхмастăн кун пек чух.
Юмахçăн чăн сăмахĕ шӳтлĕ,
Çăрттан ишет шывра пит шух.

Ир пуçласа темччен ларатăн,
Туртать иккен пулли хуллен.
Çитме-килме инçе çав Атăл,
Пĕвесенех савас куллен.

*2006.11.24.*

## ЭЛĔК ЕН

Сурăм шывĕ йăлтăр-йăлтăр,
Шыв юххийĕ шăнкăр-шăнкăр...
Сăртăн-çутăн лăппăн та кал-кал
Çумăн-çумăн вырнаçайнă ял.
Ку вăл пирĕн ырă Элĕк ен!
Элĕк ен, эс сад пек чечеклен!

Хăш-пĕр тĕл самай вăрманлă,
Ĕçлемешкĕн уйĕ-хирĕ анлă;
Хумлăн-хумлăн ешерет тыр-пул,
Такăр, тӳрĕ çул пурри те мул.
Ку вăл пирĕн лăпкă Элĕк ен!
Элĕк ен, эс хĕмлĕн чечеклен!

Килĕн-çуртăн çĕн хуралтă,
Пысăк, чаплă пӳрт куратăн.
Ĕç килет те харсăр ик алла,
Талпăнса пыратăн малалла.
Ку вăл пирĕн тимлĕ Элĕк ен!
Элĕк ен, эс сумлăн чечеклен!

Çи-пуçран илсессĕн — капăр,
Таш ташлатпăр, юр юрлатпăр;

Пӳ-сирен тесен – ялан ӗлккен,
Тарават хӑнашӑн ӗмӗртен.
Ку вӑл пирӗн сапӑр Элӗк ен!
Элӗк ен, эс ӳс те тӗреклен!

*2006.12.19.*

## КАРАС ТА ТУРТӖ ВӐЛТАНА

Юр нӑтӑрт-нӑтӑрт. Кун тӗтреллӗ.
Асфальт ҫул ҫутӑ, йӗп-йӗпе.
Ӑшши пулманччӗ хӗлӗпе.
Сукмак утма ҫапах типтерлӗ.
Эп вӑшкӑнатӑп йӗлтӗрпе
Уй урлӑ хывнӑ кив йӗрпе.

Хыҫа юлман-ха канӑҫ тапхӑр,
Шывра уланкӑ тӗлӗрет,
Сайра хутра ҫеҫ кӑшт кӗрет.
Пӗве ҫинче ларатӑн сапӑр.
Куҫне уҫсан ҫурхи ана
Карас та туртӗ вӑлтана.

Хӗвел пӑхса ярсассӑн выльӑх
Тухса тӑрать карта умне,
Хуҫи сиктернӗ улӑмне,
Путек умрах хавассӑн выллӗ.
Эрнелӗх килӗ каникул,
Ӗҫпе хӗмленӗн, савӑн, кул!

*2007.3.10.*

## ВӐЛТА ЮРРИ ЭС КӖВӖЛЕ

Ҫырма-ҫатраллӑ пирӗн тӑрӑх:
Ак шӑнкӑр-шӑнкӑр пӗчӗк шыв.
Ҫыр хӗррипе пырса ҫул хыв.
Ҫулла пулать пуль питӗ шӑрӑх.
Хӗлле каҫса кунта тӳртен
Пулла ӗнкертрӗм ирпелен.

Каҫ еннелле юр ай шыв тулӑх,
Шӑн чӑтаймасть – кӗрсе ӳкен,
Утсах тухатӑн – хӗпӗртен;
Шаланкӑна савать ав улӑх;
Тура юлать чипер пӗве,
Автобуспа ҫитем киле.

Ҫурхи кунри ултавлӑ шӗлкӗш
Йӑшсах пырать майӗпелен,
Ҫӑва тухма эс хатӗрлен,
Чунупала кӑвар пек тӗлкӗш:
Уй-хир чӗнсессӗн акана
Вӑр-вар тытаймӑн вӑлтана.

Хальччен чӑнах та «чирлеменччӗ»,
Кӑшт катӑк теттӗм пулӑҫа,
Нимле тухмасть-ҫке манӑҫа:
Пӗрре тут илтӗн – чун киленчӗ;
Малтан – ҫулла, унтан – хӗлле
Вӑлта юрри эс кӗвӗле.

*2007.4.3.*

## ЙЫШӖ ПИРӖН ПИЛӖК ЯЛ

*(Ял тăрăхӗн уявӗ тӗлне)*

Айлăм шутлă тӳрӗ сăртлăх —
Пӳлӗх ыррăн пиллени;
Пурăнмашкăн вырăн хăтлă,
Тымарне ярать Тени.

Ларнă-тухнă пит асамлă
Ик Хирлеп, Кӳпеш, Кармал,
Йăранар улт-çич урамлă...
Йышӗ халӗ пилӗк ял.

Шкулӗ пур çутта тухмашкăн,
Пуштă çурчӗ, клуб, лавкка..
Ӗмӗтре телей тупмашкăн
Ман каяс-им аякка.

Уйӗ-хирӗ панă çăкăр
Авалтан ватта-вӗтте,
Вăй-хăват чакмасăр тăтăр
Йӗркерен — кашни килте.

Улăх тăрăх выльăх-чӗрлӗх
Ӳт хушса çӳрет çулла;
Пӗвисем, ав, темӗн тӗрлӗ,
Канмалла тухан пулла...

Хӗлӗ вăрăм, сивӗ тетпӗр,
Ачасемшӗн — катаччи!
Телевизорпа тем те пӗр
Курăн — иртӗ çын хуйхи.

Çу çитсессĕн, чун кĕтсессĕн
Пухăнатпăр уява.
Вăштăр çил чупса иртсессĕн
Вĕç те кил тăван яла.

Шăкăл-шăкăл калаçмашкăн,
Тăпăр-тăпăр ташлама,
Тус-йышпа пĕрле пулмашкăн
Çиç, çĕклен теем хама.

Ĕçлĕ халăх Тени енĕ,
Ăс-халран ӳксе юлман,
Йăлине тытса киленĕн,
Савăнайтăр пур тăван!

*2007 ç.*

## ПУÇА ТАЯМ, КĂННА КУШКИ

Пӳрт карнисне саван чĕкеç
Чĕпсем вĕçтернĕччĕ тин çеç;
Çил савăк, шухă, вăшăл-вăшăл;
Пит пĕçертмест сап-сар хĕвел,
Уй-хир тăсайрĕ ыр кĕвве,
Йĕтем çинче таса çĕн кăшăл.

Ку – авăн уйăхĕ, питех
Пуçламăш утăмлă пирте.
Хĕпĕртесе ирпе вăраннă,
Алла тăсатăп çӳлĕке –
Курсам-и, кур-ха: кĕнеке!
Асамлă, шутсăрах ăмсанăн.

Унпа вĕреннĕ вулама,
Таса çырма та шутлама.
Тухья-теветлĕ хĕр арчийĕ.
Чĕнӳллĕ, ăслă-çке букварь.
Пур кирлине асра хăвар.
Телейлĕ эс, чăваш ачийĕ.

Çулла сумра кĕтӳç пуши.
Пуçа Таям, Кăнна Кушки:
Пĕлӳ çăл куçĕ – кĕнекеллĕ
Ентешĕр турĕ-çке пире;
Ĕç-хĕлĕ пырĕ ĕмĕре.
Сăнарĕ ун патвар, кĕрнеклĕ.

Пĕр ĕмĕтпе хĕрсе ялан
Çитмен-ши вăл миçе яла?
Пирн Элĕкре сахал-и пулнă?
Шута илеççĕ: çирĕм хут.
Кунта лартаççĕ капăр çурт.
Ӳсен ăру пĕлӳшĕн çуннă.

Музей шăпах халь çав кермен
(Тăрăшаканĕ ӳркенмен),
Иван Якольч ячĕллĕ-хисеплĕ
Пĕлӳ сунталĕ хăтлă шкул.
Букварь тивлечĕ – аслă çул.
Чăваш ачи хастар, тĕреклĕ.

*2007 ç., авăн.*

## ЕНТЕШЛӖХ

Çӗрӗ-шывӗ савнӑ Элӗк енӗн
Хамӑра кура паха, чечен;
Ывӑл-хӗрӗ хӗвелпе хӗмленнӗн
Маттуртан маттур-çке — тӗлӗнен.

Пӗчӗкрен кашни ӗçе иленнӗ,
Вӑй выляни, тухнӑ улӑха,
Шкулӗ хӑй асамлӑ ӑс пилленӗ:
«Вӗренни ӳстерӗ пурлӑха».

Сар пике пӑхать ав выльӑх-чӗрлӗх,
Тырӑ-пулӑ пуссинче — савни;
Ял-хула тӗрекӗ — ырӑ пӗрлӗх:
Хӗпӗртетпӗр чунтанах кашни.

Ялӗсем чӑнах та йышлӑран-и,
Ывӑл-хӗр чӑнах та маттуртан —
Пурнӑç пӳрнӗ чиксӗр вӑхӑтран-и,
Йӑх каять таçтах ялӑмӑртан.

Шупашкар вӑл пирӗн тӗп хуламӑр,
Элӗк ен ачи пайтах унта.
Пӗр йыша пӗрлешнӗ эпӗр хамӑр;
Ентешсем, телей сире кунра-çулта!

Çирӗп пултӑр чӗрӗ тус-тӑванлӑх.
Уявра эпир ялан пӗрле.
Юрӑ юхтӑр чун уççишӗн анлӑн;
Ташӑ-çемӗ, эс те кӗр-кӗрле!

Мĕн калас татах ман ăш сăмахшăн
(Ĕçлĕ халăх савăнтăр самай)?
«Кил, тавсси!» – теем-и чăн чăвашлăн
Шăпăл-шăпăл алă çупнă май?

*2007.4.11.*

## МĂН ТУКТАШРА

Тăван ялăм Карамал – сăрт çинче,
Пахчаран курăнать аякри,
Мăн Тукташ манщăн пулмĕ инçе:
Пурăнать çавăнта мăн аки.

Хĕллехи каникулччĕ ун чух.
Ыр тăван кĕтсе илчĕ мана.
Кӳршинче ачасем темĕн чул,
Эп те тухрăм часах выляма.

Çывăхра хĕп-хĕрлехчĕ пилеш,
Шăн юр пуснă çӳлти турата.
Çырлине астивессĕм килет.
Паллă сăвăç çуралнă кунта.

Сахал мар сăвă-юрă ăшрах,
Калавне те вуланă савса.
Уçă çил чупса иртрĕ вăрах,
Турата çупрăрларĕ авса.

Пит кĕрпеклĕ çимешкĕн пилеш
Сапакан туратрах усрансан.
Йывăççи çĕкленет йĕкĕреш.
Çĕн папка сапалах юр кайсан.

* * *

Илле Тукташ тăванĕпе,
Малов Виталий тенипе,
Пĕрле вĕрентĕмĕр шкулта,
Туссем пулайнă çав çулта.

Тин çеç илсеччĕ ăс хутне,
Тур пӳрчĕ ак вĕсен патне
Çитсе кĕме, хăналанма.
Хавас куна эппин ан ман.

Çу варринче хуран кукли –
Чăвашăн çимĕç пит тутли.
Çулсем иртеççĕ ерипен –
Йали-йĕркийĕ пирĕнпех.

Поэт çуралнă кил – музей.
Иртни хăш чух аса килет.
Чĕлхе çинчех хуран кукли,
Мăн Тукташра хăна пулни.

*2007.7.27-28.*

* * *

Шăратнă çу пек сарă ват ăшши
Тăп чарăнса шăп юлчĕ хыçала,
Хупла, мăкла, тытсам Пукрав ăшши,
Сивви ан кĕтĕр хăвăрт, кăçалах.

Ана-йăранăн сумлă тепĕр ĕç:
Суха касси чĕлет кĕрхи çĕртме.
Курак пулкки, хастаррăн явăн, вĕç,
Вăй пух çитес çĕре çитме!

Тĕтре тăрать. Мăн йывăç çаралман.
Ӳркенменни утать, ав, кăмпана.
Ыр кăмăлпах кĕтет ăна вăрман,
Çивиттипе витсе уплюнккана.

Çула тухмашкăн пур-ха «урхамах» —
Велосипед ман чаплă тус, юлташ:
Вăй кăларса пыратăп эп хамах,
Сăрт-тăвайкки те пулмĕ чăкăлташ.

Тахçан çӳренĕ евĕрлех паян:
Руль аялта, çунатти те çук.
Çапла майпа çăмăллăнах каян,
Тиев пулсан та парăнать мăн çул.

Е кăмпана, пулла-и, мăйăра
Пайтах хутларăм мар-и çăвĕпе;
Хĕле кĕтетпĕр, кӳлмĕп «урхамах»,
Шур юр ӳксессĕн тухăп йĕлтĕрпе.

*2007.10.15.*

* * *

Улмуççи те тăкрĕ çулçă,
Айĕ ун халь хăмăр та кĕрен;
Çумĕпе иртеймĕн çулсăр,
Пахчана сăваплăнах кĕрен.

Кукăрта пĕр тĕм пит йĕплĕ —
Илĕртет куçа шăлан çырли!
Пылакне упрать вăл тĕплĕ:
Кăкшăм евĕр çимĕçре — ырри.

Вăрăм кĕрĕн ăмăр тапхăр,
Йăс-йăс çумăр ӳкĕ темĕнччен.
Çырлана хавас пухатпăр
Ирсерен ĕçмешкĕн техĕм чей.

*2007.11.3.*

* * *

Хĕл ларчĕ. Сивĕ шатăр-шатăр,
Чӳк вĕçĕ килмĕ ăшăпа.
Çӳл пӳлĕхçĕм мана вăй патăр
Уй урлă каçмашкăн ашăмпа.

Улма пахчи. Юр кĕшĕл-кĕшĕл.
Тĕмсем хуралнă-çке — паллан!
Вăш-ваш вĕçет ав чăмăр кĕпшĕл.
Рет-ретĕнех кунта палан.

Çил кĕреймест те, питĕ лăпкă.
Хĕп-хĕрлĕ тĕс епле хитре!
Ирхи çанталăк тимлĕ, хăтлă,
Татас-им-ха пĕр-ик витре?

Çук-çук, лăп лартăр вĕлтĕр хулă,
Пĕве умра кĕтет мана!
Пăр айĕнче ишет çут пулă,
Килем-каям-и хăнана.

Пĕлтĕртенпе çыран, тен, маннă
Çак ват çынна, ӳркенмене.
Пакша чĕрне йĕрне хăварнă.
Вăлта авсса ай! киленем.

*2007.12.04. Шупашкар, вокзал.*

* * *

Вĕт юр вĕçет хĕлле,
Ăрша чупать çулла;
Курасчĕ ман куллен
Ыр сăн-питри кулла.

*2007.11.14.*

* * *

Çырла пахчи, улма пахчи –
Лаптăкĕпе пăхмашкăн анлă,
Лапамĕнче утар мунчи;
Çырма пуçне пĕве картланă.

Вĕренĕве пăрса шкултан
Килеттĕмĕр йышпа кĕр кунĕн;
Ĕçе пикеннĕ кăмăлтан,
Хĕвел шевли йăваш та кунĕ.

Çав тапхăр юлчĕ-мĕн хыçа:
Хуçалăх юханнă, арканнă;
Ача-пăча – чăн-чăн пăрçа
Хутаçĕ çурăлнăн саланнă.

Кĕр илемне çупăрласа
Пахча енне вăрах уттартăм,
Шăп кайăк вĕçрĕ пăрлатса,
Тĕм авăнать сулмак туратăн.

Тăхлачă-пĕлĕш тимлесе
Хура пилеш татать пит савăк.
Палан пиçет ав хĕрелсе –
Ӳркенмесен турттарăн лавăн.

Хунав ҫăра – иртмешкĕн хĕн,
Улмуҫҫисем ҫатра ĕретлĕн,
Ҫимĕҫсем сапаҫҫĕ хĕм.
Кĕр ырлăхĕ пурах-ха тетĕн.

Уйра пуҫра-и куршанак?
Сад-пахчара йăлийĕ урăх:
Ҫумрах йăл илнĕ хурăн ак...
Сая каять-и пиллĕ пурлăх?

Сивлес-и манăн пурнăҫа?
Ҫĕр пичĕн ырлăхĕ-ҫĕклемĕ
Тӳнтермĕ пирĕн шанăҫа.
Вăй хумасан нимскер илеймĕн!

*2008.10.13.*

* * *

Айван-ҫке пулнă эпĕ темшĕн.
Мĕн калăн, халĕ те айван.
Ăна-кăна чухланă темĕн.
Чăнни, суйи вăл – пĕр тăван.

Ҫӳлтен пире каланă ҫирĕп,
Лартатпăр тенĕ ҫут кермен;
Ҫырма хĕрри – хăва та ҫирĕк,
Каҫса курмашкăн тӳр килмен.

Ҫынна темле те улталанă.
Чухласшăн пултăн-и? Кала!
Тĕрĕссине тирпе хупланă,
Йĕри-тавра хăть пăхкала.

Йăпăлтатма пĕлместĕп: паллă.
Юна вырнаçнă ĕненӳ.
Камсем-ха суяпа тăванлă?
Çавсен пулаймĕ ӳкĕнӳ.

*2009.11.11*

* * *

Хăй евĕрлĕ тапхăр хĕл умĕ:
Чечек çурăлмасть улăхра,
Пурах-ха çапах унăн сумĕ:
Канать пурлăх кӳнĕ тăпра.

Пур çулçăллă йывăç çаралнă,
Ун айĕ шыв сыпнă, йĕпе.
Йăс-йăс çумăртан-и хăранăн
Лармастăн килте кунĕпе.

Усратăн пулсан выльăх-чĕрлĕх
Чăрмавĕ лекет кунсерен.
Уй-хирĕн, вăрманăн пĕр пĕрлĕх:
Хăват илмелле çĕнĕрен.

Йăс çумăр кăштах чарăнсассăн
Уттартăм çулпа вăрмана,
Çил вĕрчĕ хыçран кассăн-кассăн —
Çунат хушса пачĕ мана.

Шăршаннă каска вулă тăрăх
Вăраннăн ихет уплюнкка,
Турат чăнахах та-мĕн хăрăк,
Куçа илĕртет йăпăлкка.

Утса та, чупса та ҫӳрерӗм
Таса сывлăшпа киленсе.
Тӗл-тӗл ашкăрать хытнă эрӗм,
Каҫ сӗмӗ хуплать йăх-тӗсе.

Хăй евӗрлӗ тапхăр хӗл умӗ:
Пур выльăх килте, картара;
Чупать, ҫиҫкӗнет сывлăш хумӗ,
Хӗвел пайăрки катара.

*2008 ҫ., чӳк.*

* * *

Хам алăпа чутларăм йӗтӗр
Икерчӗ-кукăль унама,
Магазинта туянтăм йӗлтӗр
Юр ҫийӗн хыттăн ярăнма.

Уявӗсем пулаҫҫӗ тăтăш
Чиркӳн те пурте ылмашса.
Спортра кураймăн кăтăш,
Вăя тăкатăн тупăшса.

Ҫӗнтерейсен ҫӗкленӗ кăмăл.
Кая юлсан-и? Ан ятла!
Канса илсен шăм-шак та ҫăмăл,
Пуҫа усмашкăн ан шутла.

Чăн ырлăхах тесе хаклатăп
Кăшт ҫеҫ вăрман хӳтти пулсан.
Ҫил-тăманра та ăнтăлатăп,
Юр кӗрчӗ вырттăр-и кулса.

*2008.11.9.*

* * *

Пирн пурнăç хăвăрт улшăнуллă,
Сисеймĕн – çĕнелет саккун;
Йăли-йĕркийĕ хумлă-хумлă,
Тара ӳкетĕн уссăр кун.

Куçпа курни пулсан татахчĕ –
Пытанчăкки тăрать вăйра;
Пĕкки-турти юртсан чухахчĕ,
Хуçи-тарçийĕ – вăчăра.

Вăрлас-пуяс килет этемĕн,
Коррупци теççĕ çĕнĕлле.
Ăна çĕнейĕн-ши ку темлĕн?
Апла-капла-и – иккĕлле.

Ăçта укçа, унта ултавлăх,
Нухратсăр пурнăç сыпăнмасть.
Эппин, кирлех-кирлех çăварлăх
Пуçа пĕкме те тăп тăма.

*2009.1.10.*

## *КУÇÇУЛĔПЕ ЙĔРЛЕННĔ ЯРĂМ*

### КАЯТĂП ЭПĔ ЫВĂЛĂМ ПАТНЕ

Шух пуйăс чупать çап-çутă çулĕпе,
Ик айккипе тĕмсем сип-симĕс.
Вăрман хĕрри пулать-им тикĕс?
Çерем куçать ав тĕлĕ-тĕлĕпе.

Кӗтӳ ҫӳрет. Вӗлт юлчӗ хыҫала.
Юман сывлать ҫил майӑн тарӑн
Сив кунсене хыҫа хӑварнӑн...
Пур илеме илеймӗн пӗр алла.

Каятӑп эпӗ ывӑлӑм патне,
Ун ак ыран ҫуралнӑ кунӗ;
Чӗр йывӑҫ-курӑкӑн пур чунӗ;
Хӗвеллӗ кун пулайӗ ыр ятне.

Анкартинчи шерпетлӗ ҫереме
Пӗр чӗл касса илсе сумларӑм,
Таҫтан килет-ҫке тӑвӑл-ахрӑм
Пӑчӑртаса сисчевлӗ чӗреме.

Пирн ывлӑн амӑш пичӗ йӗп-йӗпе,
Чун хурланать-ха унӑн питӗ,
Кайран май килтерсе вӑл ҫитӗ, —
Йӗре-йӗре хавшарӗ хӗлӗпе.

Кать-качака та пӑхрӗ тӗмсӗлсе –
Чипер ҫитсе килмешкӗн суннӑн;
Чӑхсем саланчӗҫ унӑн-кунӑн...
Инҫе ҫула уҫман ҫав пӗлтӗрсем.

Каятӑп эпӗ ывӑлӑм патне,
Шӑпах ыран ҫуралнӑ кунӗ,
Ҫӳл тӳпере ҫӳрет пуль чунӗ...
Ҫерем саратӑп вил тӑпри ҫине.

*2008.5.29. Пуйӑс ҫинче.*

## КĔРХИ ÇИЛПЕ КАШЛАТЬ ВĂРМАН

Ытла та хăтлă пулчĕ мăйăр,
Темле тӳрех асăрхаман.
Хунавлăхра вĕçет-им хăйăр?
Кĕрхи çилпе кашлать вăрман.

Çу вĕçĕ килчĕ лăпкă, шăрăх.
Курланкă ярăмĕ — ахах!
Çырма-çатраллă пирĕн тăрăх,
Пур йывăçа ӳсме чухах.

Пĕр вырăнта тăмасть çын шавĕ,
Машина пур килме-кайма;
Вулла кармашăнса ал авĕ,
Вăраххăн куçăн айлăма.

Велосипед-çке ырă маншăн,
Унпах çитетĕп инçене.
Ир кӳлĕмле, шăм-шакăм, ан шăн,
Пырам-и хырлăх леш енне.

Тĕмсем кунта çӳле кармашнă,
Ӳкет тут çимĕç тип çĕре,
Пуç пĕкнипе ырсан канмашкăн
Выртатăп меллĕн, месерле.

Шăпах çапла ман ывăл выртнă:
Ӳтре тем мăкăль ытлашши.
Çĕнме шанса шăлне, тен, çыртнă...
Эп пĕлнĕ-ши, эп пĕлнĕ-ши?

Машинăпа çулла çитетчĕ
Çемйипелен инçе çĕртен.
«Çак мăйăра санпа килемччĕ», –
Шутлатăп выртнă май çĕрте.

Эп пĕлнĕ-ши, эп пĕлнĕ-ши?
Ӳтре сан темĕн ытлашши.

Татах та тулăх пулĕ мăйăр –
Килеймĕн эсĕ çакăнта.
Вил тăпруна хупланă хăйăр...
Чуну çӳлтех пуль, тен, кунта?!

Лăпланмĕ вată кăмăл ман...
Кĕрхи çилпе кашлать вăрман.

*2008.3.10.*

## РАШТАВ

Йĕпе çине ларать-им хĕл?
Пĕве пăхма çап-çутă пăрлă,
Уй-хир, сукмак – йăлт шурă юрлă,
Шуçлак тĕлте утмашкăн хĕн.

Çулталăк вĕçĕ - сив раштав.
Ăçта сивви?! Тĕтре те пĕлĕт.
Пулла тухма пулсаччĕ ĕмĕт.
Йăлт ирĕлчĕ. Калас-им: «Тав?»

Ку уйăх вăрăм. Кун кĕске.
Хĕвел пăхсан пуçланчĕ сивĕ.

Хура çĕре вăл хытă тивмĕ.
Куççуль тухать çав ман мĕнскер?

Атте пуç хунă вăрçăра –
Пире тиеннĕ пысăк хуйхă.
Ăçтан килет вăл тепĕр суйхă
Хĕвеллĕ тăнăç вăхăтра?

Лартатпăр халĕ ик çурта.
Тĕреклĕ пулнă ывăл пирĕн –
Çар çыннисем вăй-халлă, çирĕп,
Чире кĕртместĕн кил-çурта.

Çапах çакланнă путсĕр чир
Канма тухас чух нĕрсĕр шыçă.
Вăранайман çын вырттнă хыççăн.
Ăна пĕлмен тӳрех эпир.

Раштав кĕтет умри çула.
Шăрçаласа çыру çыратăп
Виç адреспа вĕçес çунатăн –
Илет салам виç мăн хула.

Пайăрласа ят хыççăн ят
Йĕркесерен йĕрке хушатăп,
Куççуль çăтса пит хурланатăп:
Салам йышне кĕмест пĕр ят.

*2008.12.30.*

## КАШНИ ВУЛЛИ – АРМАН ЙЁКИ

Ах, çак хырсем епле илемлĕ:
Кашни вулли – арман йĕки!
Лартса тума этем тимленĕ:
Ялсен çапла йăли-йĕрки.

Çунат сулмасть-ха çил арманĕ,
Çав вăхăт юлнă хыçала.
Чĕнет пымашкăн хыр вăрманĕ:
Килсе çӳретĕп хуçалла.

Хĕлле-çулла-и – уççăн сывлăн.
Вăрманăм, хӳтлĕх, сывлăх пар!
Сиенлĕ пулчĕ сывлăш ывлăн –
Хуйха тӳсмешкĕн çăмăл мар.

Йĕлтĕрпеле çĕн йĕр хыватăп
Тăман вĕçтернĕ кунсенче,
Хама калатăп: «Час ан ватăл...»
Канатăп чăрăш тĕлĕнче.

Пĕр вашăк сăртлăх – хыр та чăрăш,
Хырсем сайра та аслăрах.
Хĕл кунĕн ырлăхĕ пит кăрăс,
Хĕвел шевлийĕ йăлтăрах.

*2009.2.13.*

* * *

Хысак пек вырăн. Кивĕ юр.
Çуран утатăп янкăр кун.

«Атте, — тимлерĕ, ывăл ку! —
Мĕскер шыратăн?» Кур-ха, кур:
Йăшт пӳллĕ, сывă, çарамас;
Сасси! Сасси ун — хăйĕннех:
Чĕлхе сиенсĕр — мĕн калас —
Яланхиллех, яланхиллех!
«Эс вилнине çирĕплетме
Хутсем тăвасшăн çĕнĕрен...»
Пулмарĕ тек сăмах чĕнме:
Вĕçернтĕм эпĕ тĕлĕкрен.
Пит-куçăм хамăн йĕп-йĕпе.
Тăрса ларатăп та каллех
Тăсасшăн чĕрĕ тĕлĕке
Выртатăп лăпкăн месерле.
...Умра çухалнă пĕтĕмпех
Сĕрен кĕперĕ евĕрлех.

*2009.3.3.*

## ЧУН ТУРТĂМĔ

Чун туртăмĕ — хăватлă туйăм —
Йăл илнĕ мар-и ачаран?
Тăван кĕтес, вăрманăм-уйăм,
Куç умĕнчех çиçсе тăран:
Çырма-çатраллă, лупашкаллă,
Чылай çĕрте самай тӳрем.
Пĕрре юп курнă та, мĕн калăн,
Çак таврашрах, эппин, çӳрем.
Хĕлле сыратăп эпĕ йĕлтĕр,
Уй урлă çул ман — катана.
Çулла — «çуран ут» вĕлтĕр-вĕлтĕр,

Унпа ҫитетĕп катанах,
Кăмпа, ҫырла е сиплĕ милĕк
Илсе килетĕп вăрмантан.
Сурмасть-им-ха шăм-шакăм, пилĕк
Пĕрре иртсессĕн утмăлтан?
Пуллаваскан ҫич-сакăр ҫухрăм
Е ытларах та хăш-пĕр чух;
Вăй-халăма ҫухатрăм-тупрăм,
Чĕре ҫапах-ха тапĕ шух.
Ветерансен пур ыpă ушкăн –
Эп те ермешрĕм-ха унта, –
Пуҫа усса лармаҫҫĕ пушшăн,
Юрра-ташша хавас кунта.
Лĕпке ҫине тиенчĕ хурлăх,
Хора пăрахрăм ҫӳреме.
Эстрада халĕ маншăн – шурлăх,
Хавшатĕ ҫеҫ вăл чĕреме.
«Кала гитара, ярăм сăвă», –
Хытах чĕнет пĕри, тепри...
Ывăлăма сăвап-и тăвăп,
Рая кĕртеймĕҫ тетĕр-и?
Чун туртăмĕ пур манăн хамăн:
Тĕрек тупатăп вăй-халра,
Кĕрешĕве тухма хăрамăн,
Ялан ĕҫ выллĕ ик алра.

*2009.3.9.*

* * *

Хура гранит кăшт йăлтăр
Тĕрек ҫинче,
Ик хĕрлĕ йăрăм, пĕр ҫăлтăр
Погонĕнче.

Хура костюм та галстук.
Шур кĕпепе.
Яланлăхах-çке палăк
Çар тумĕпе.

Çара пуç. Çӳç сайралнă.
Усси кăшт пур.
Çамка кĕретĕн анлă —
Курас çук хур.

Пăхать куçран сисчевлĕн —
Чун тăванни —
«Анне, ку эс-и? — тенĕн, —
Çитейрĕн-и?

Атте килсеччĕ пĕлтĕр
Куççулĕпе.
Чул палăк халĕ. Пĕлтĕр:
Çар чысĕпе.

Каварлă пулчĕ сывлăш —
Ăçтан пĕлен?
Бензинĕ йăскăн сырăш,
Патша çĕлен».

— Каçар пире эс, ывăл,
Пăхайманран,
Чире сирмешкĕн сыввăн
Ăс паманран.

Чечек çыххи — çич кăшăл
Тăпру çинче;

Сив çумăр е çил вăшăл
Ир-каçсенче.

Пĕрех эс канлĕн çывăр
Инçе çĕрте,
Тăпру ан пултăр йывăр
Çурла-кĕрте.

*2009 ç., çĕртме.*

* * *

Ывăлпа хĕр çума-çум –
Пирĕн ырă мăнуксем –
Ӳсрĕр хӳхĕм çултан-çул
Элĕке сайра килсех.
Шав ĕçлетĕр, вĕренетĕр,
Аннĕрпе сăмах сӳтетĕр,
Аçăра аса илетĕр.

Пĕр хулан ик-виç хула
Çурçĕр, кăнтăр енсенче.
Сивĕ хĕл-и е çулла
Вăхăт пулнă кунсенче
Аçăрпа çитсе пуплетĕр,
Чĕр чечек хурса килетĕр.

Аçăр тăчĕ хĕсметре –
Анăçра, унтан – кунта;
Куçнă эсĕр те пĕрле,
Ихнĕ тĕрлĕ вырăнта;
Шкулăрта чипер вĕрентĕр,
Малаллах пăхса тимлетĕр.

Тухмаллаччĕ пенисе
Вăхăт тулнă майĕпе,
Илмеллеччĕ кĕç хваттер;
Пурăнма майне çитер —
Савăнса çеç шăкăл-шăкăл,
Çемьепе ак вăшăл-вăшăл.

Сĕмсĕр чир пĕр сырăнса
Çапрĕ-хуçрĕ сыв çынна,
Лартăр эсĕр тăвăнса
Хĕллехи синкер кунра.
Çар чыспе ăна пытарнă,
Ыр сăмах самай каланă.

Пиччĕш çитнĕ маларах,
Аппăш — хурлă вăхăтра;
Хуйхă пуснă шалтăрах,
Ашшĕ-амăш çав шутра.
Йывăра эсир тӳсетĕр,
Хуйхăра ĕçпе сиретĕр.

Турă пӳрĕ авланма,
Туй тума, качча кайма;
Пил памашкăн çук açу,
Пырăп эпĕ, асла́çу.
Элĕке хăш чух килсемĕр,
Пирн тымар кунта çав тейĕр,
Хаклă, ырă мăнуксемĕр.

*2009 ç., çурла.*

## КАЛЕМ ТЫТАТĂП

Сăвă шăрçалаççĕ –
Сăвăççем нумай.
Тимĕр çапнăн лаçĕ
Хĕм сапать самай.

Манăн пур-ши тӳсĕм
Рифмăна авма?
Тăваяп-ши хӳхĕм
Янкăс шăнкăрма?

Ăсталас тесессĕн
Чунупа вутлан,
Ан янраш тӳрккессĕн,
Лашуна утлан.

Хам валли çыратăп -
Кам валли тата?
Чăр та чар çуратăп
Чĕлтĕр шур хута.

Тепĕр чух ларатăп
Сиплĕ пахчара,
Калеме тытатăп
Пушă вăхăтра.

*2009.6.30.*

# «КАТАРАН КУРНАТЬ ХĂЛА»

Çырсамччĕ çав, çырсамччĕ сăвă
Поэма шайĕ-хаппипе;
Чунра шăраннă - пулнă хăвăн,
Перо чупайнă сиккипе.

Улма сăпасĕ кунĕ шукăль,
Çапсаччĕ авăн йĕтемре,
Килте çисессĕн ăшă кукăль
Çырам-ха терĕм виç йĕрке.

Шур хут çине выртать сулмаклăн
Хирте тимленĕ пур ĕççи,
Выртса пырать, чăнах, сулмаклăн
Хĕреслĕ рифма, ямб виçи.

Вун çиччĕре-ха пулнă эпĕ.
Вĕреннĕ. Ак часах хĕлле
(Юлташ та пурччĕ сăвăç тепĕр)
Журнал тăвайрăмăр – «Хĕлхем».

Ачалăхран тухманччĕ хамăр:
Тени – илейрĕм сапăр ят.
Института кĕрсен, курсамăр:
Сăн-питĕм çиçрĕ йăлтăр-ялт.

Çитме-килме миçе вун çухрăм?
Шанса тăратăн ырана:
Мĕн çырнине тĕркемĕн çыхрăм,
Хăвартăм тĕплĕ вырăна.

Çĕн туссене эп кăтартман çав.
Те именнĕ? Тем çитмен.
Аса килет те – кулянан шав:
Хăв япалу-çке – хĕрхенен.

Ялта хут-çĕтĕк пухаканшăн
Юравлă пулнă ман тĕркем,
Чуна парса хут çыраканшăн
Ик-виç йĕрке те – мăн çĕклем.

Шăп пĕр йĕрке асра хăварнă
(Хуллен çĕклетĕр кăмăла),
Вăрман çинчен çапла калană:
«Ав, катаран курнать хăла».

*2009 ç., чӳк.*

## ТУЙ МЕШЕХИ

Хĕвел çӳлте. Çывхарнă кăнтăр.
Килетĕп эпĕ пулăран.
Велосипедăм – кăлтăр-кăлтăр
Асфальчĕ тикĕс пулнăран.

Вăшт çеç иртет-çке майлă, хирĕç
Мотор сассиллĕ «урхамах»,
Асăрханмашкăн кам-ши тивĕç?
Сиксе ан тухтăр пăтăрмах!

Пăрăнчăкра хĕвел çеç кулчĕ –
Мана пымашкăн пит аван,

Часах янравлӑ сасӑ пулчӗ –
Килет, ав, хирӗҫ караван.

«Пӗкки-турти», ай! кур-ха: капӑр!
Каяҫҫӗ мар-и хӗр илме?
Туй мешехи илпеклӗ, сапӑр,
Пӑрах халь эсӗ тӗлӗнме.

Ҫӗн эрнере ҫуртри юлташӑм
Чӗнет така тирпейлеме.
(Йӑли-йӗрки ҫапла чӑвашӑн),
Сӑра та вӑхӑт вӗретме.

...Кӑнтӑрлапа пит пӑчӑ, шӑрӑх,
Кӗтетпӗр туйӗ килессе.
Хӗвел ҫинче епле-ха тӑрӑн?
Куҫатпӑр сулхӑн кӗтесе.

Хӗр ҫумӗсен ларма-тӑма-и?
Шӑнкӑравлаҫҫӗ вӗҫсӗрех:
Пуҫтарӑнса ҫаплах тухман-и?
Кӗтетпӗр эпӗр пур пӗрех.

Мӑн урамра сисчевлӗ сасӑ:
Кӗрӳ «лашийӗ кӗҫенни»!
Пӳрне хуҫса шутне сусассӑн
Вун виҫ машина тетӗн-и?

Малтин кӳми чечек ҫыххиллӗ.
Пике, ха! тытнӑ «чӗлпӗре»!
Кӗрӳ тени питех те пиллӗ –
Кавир сараҫҫӗ тип ҫӗре.

Илсе килни чипер принцесса.
Епле машина?! Йăм хура!
Кĕрӳ подьездалла кĕрсессĕн
Çавскер, ав, тухрĕ - хăв куран:

Сап-сар кĕпе ун, кăкăр уçă,
Çинçе ура та йăшт пӳ-си,
Çӳçĕпеле ирхи чăн шуçăм,
Хĕвел шевлийĕ теесси.

Çулра пыма хура тĕм куçлăх.
Халь унсăрах вăл пирĕшти.
Тен, ашшĕ унăн пысăк пуçлăх,
Ачи-пăчишĕн чун ăшши.

Хĕре илсе тухма каларĕç —
Пит меллĕн çаврăнч «тăрантас»,
Ни юрламарĕç, ташламарĕç,
Пур çамрăк йыш та — ма хăртас?

Машинăсем вăрах йăмсассăн
Хĕр ашшĕ тухрĕ кăкшăмпа.
«Ĕçтер-ха, — тет мана, — тархасшăн
Кӳрше-арша ыр кăмăлпа.

Йăли-йĕрки халь çырăнмашкăн
Тĕп хулара, мăн керменре.
Чунна пăчăртаса хыт ан шан:
Туйне лартаççĕ кафере».

Пухăннисем-и? Хамăр халăх,
Сăмах-юмахĕ иксĕлми.

Пуянлăх пур-ши мухтанмалăх?
Йăли çухалмĕ ним пĕлми.

*2009 ç., çурла.*

## СĂВĂ КУСТĂРМИ
*(Шӳтлĕреххĕн)*

Уйăн-хирĕн вĕççĕр çур аки
Камшăн пулĕ сăвă кустăрми?
Çын тени пĕр ӳркенмесĕр,
Пайтине пачах илмесĕр
Шур хута чĕрет чăл-пар,
Сăвă пĕккине авать вăр-вар.

Пирн чăваш йышпа сахал-и —
Анлă Атăлăн хавалĕ?
Пултарулăх тĕрлĕ енлĕ,
Яланах ĕçпе киленнĕ,
Меллĕ пушă вăхăтра
Юрă-ташă та — шутра.

Арçынсен хăватлă сасă:
Тилмĕрет чĕлме çĕн касă;
Хĕр çумсен йăваш, чечен;
Ун пирки ан иккĕлен.
Хăшĕсемшĕн — вăйă-кулă.
Арçынсемшĕн ку - ют пулăм.

Вăрçă чух-çке эпĕр ӳснĕ,
Йывăра чăтайнă, тӳснĕ.
Хĕр упраçăн — кĕнчеле,

Чĕнтĕр çых та тĕр тĕрле:
Хатĕрлен качча каймашкăн,
Парнепе хисеп пулмашкăн.

Сăвă кустăрми çаксемшĕн
Çывăха пыман – телейшĕн.
Пур пĕрех ик-виçĕ ят –
Çутă çалтăр, йăлтăр-ялт;
Кĕнеке самай кăларнă,
Сумлă йĕр чĕрсе хăварнă.

Вăхăт хумĕ чăрсăр, шухă,
Пулаймасть нимскер те пушă;
Мĕн куратăн халь çинче
Хĕр упраçăн лаççинче?
Пир тĕрки мар, пин йĕрке,
Сăвă çаврăм çĕр тĕрке!
Кам питех-ши вуламан –
Чуптăр сăвă кустăрман.

*2009.10.27.*

## СĂВĂ СĂВĂРНИ
*(Шӳт)*

Вĕлтĕр-вĕлтĕр çаврăм çил
Пыллă шăрăх вăхăтра
Ăшă пиллĕн хирĕç килч;
Эп тăраттăм-ха сăртра
Рифма-ритм сăвăрса,
Алăпа ылмаш сулса;
Суйламалăх тĕшши çук,
Мухтанас пулмасть ку чух.

Вăшкăртса уй-хир урлах
Çитрĕ капăр кĕнеке;
Юлташсен хăват пурах,
Уямаççĕ сум-тенке:
Пичетлеççĕ сулăмпа
Пухнă хĕсĕк укçапа.
Манăн пур-ши каласси?
Кутăн-пуçăн вылясси?

Сых тăраççĕ хуралта
Хăрăк шăллă тӳресем.
Пархатарĕ — хамăрта,
Ан вĕтел сăмах чĕнсе.
Çыртăм пурĕ çич йĕрке,
Пулчĕ хӳхĕм кĕнеке, —
Йăл-йăл çиçрĕç чечексем,
Юрă тăсрĕç шăпчăксем,
Таш ташларĕç йывăççем.

*2009.8.17.*

## ШĂНКĂР-ШĂНКĂР ШЫВ ЮХАТЬ

*(Халăх юрри майлă)*

«Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать,
Шыв юхать те — чул юлать...»
Сăвă-юрă кĕнеки
Асăнмалăх пултăр-и.

*2009 ç., юпа.*

# ТУПМАЛЛИ

Тӗкӗнеймӗ ҫын алли ........ 3
Хирте тӗрлӗ чечек нумай ........ 4
Шарласа юхать Хирлеп ........ 4
Ачалăхри, асра юлни ........ 4
Ял енчен тăсăлать аслă улăх ........ 5
Экзаменсем пыраҫҫӗ вӗҫленсе ........ 5
Ҫапах та мӗншӗн шӗл кăвар? ........ 5
Эп те ҫамрăк поэт ........ 6
Шўт ........ 7
Тутăр тӗсӗ – хӗрлӗ ҫип пӗрчи ........ 8
Кӗмӗл кубок ........ 8
Пӗчченех ........ 9
Каҫсерен шăнтать ........ 10
Пин "ҫăлтăр" ........ 11
Н.В. кинӗме ........ 12
Ку халлӗн ҫанталăк ........ 12
Йӗлтӗрпе ҫўретӗп ........ 13
Нарăс ........ 14
Пӗлес тетпӗр ........ 14
Ҫӗнӗ пўрт ӗҫкинче ........ 16
Суйлав умӗн ........ 16
Илья шăллăма ........ 17
Аттен шăллӗн хӗрӗ ........ 18
Пулла тухса лартăм ........ 18
Пин ҫуллăх ........ 19
Камсем-ха эпир… ........ 20
Илья шăллăмăн, Нина кинӗмӗн ........ 21
Ҫўле ҫӗклен эс, «Урожай!» ........ 22
Нина кинӗмӗре ........ 23
Хӗл варринче пулла эп кайрăм ........ 24
Тăван турат ........ 25

Çур еннелле пăхать çанталăк .......................................... 27
Килтĕшри ăмăрту .......................................................... 28
Кунта вĕреннĕ эпĕ .......................................................... 29
Кĕсменсем тăкатчĕç йăлтăр кĕмĕл .................................. 31
Хĕрсем ларма ларатчĕç ................................................... 32
Çырма урлă выртать йĕр сурпанăн .................................. 33
Хупанкине курланкă уçнă ................................................. 34
Кĕме чĕнеççĕ партие ...................................................... 35
Çуралнă кун-и сан паян? ................................................. 36
«Раççей йĕлтĕр йĕрĕ-2005» ............................................. 36
Сивĕ çилĕн çĕр пĕр хĕлĕх ............................................... 37
Эпĕ пур пĕр – йĕлтĕрпе .................................................. 39
Çăварнире ăсатнă сив хĕле ............................................. 40
Март çитрĕ-тăчĕ... ......................................................... 41
Медаль параççĕ пирĕн ÿсĕме ........................................... 42
Туй кÿмипе килет шыв-шур ............................................. 43
Йăваланать кÿл çийĕн шур тĕтре ..................................... 44
Юрă уйĕ ....................................................................... 45
Ыр ватлăх тĕлкĕштĕр пирте ............................................ 45
Хĕртсех тăрасшăн эпĕ хĕм-вутта ..................................... 46
Пит тăнăç кун, вырсарнире ............................................. 47
Çĕлен ăшши вăл – авăнра ................................................ 48
Мăн вар хĕрри ашса пырас çулра .................................... 49
Йĕлтĕр сыр та ярăн хăвăрт .............................................. 50
Пысăк сивĕ килчĕ кăрлачра ............................................ 51
Канăç тапхăр ................................................................. 52
Тăван ялăм Кармал Тени ................................................ 53
Ейÿ ишсе антарнă çыранра .............................................. 56
Çумăр çурĕ-и? ............................................................... 57
Ват ăшши иленнĕ вăрăм улăх .......................................... 58
Вăхăчĕпе каллех хĕл ларчĕ ............................................. 58
Элĕк ен ........................................................................ 59
Карас та туртĕ вăлтана ................................................... 60

Вăлта юрри эс кĕвĕле ........................ 61
Йышĕ пирĕн пилĕк ял ........................ 62
Пуçа Таям, Кăнна Кушки ........................ 63
Ентешлĕх ........................ 65
Мăн Тукташра ........................ 66
Шăратнă çу пек сарă ват ăшши ........................ 67
Улмуççи те тăкрĕ çулçă ........................ 68
Хĕл ларчĕ. Сивĕ шатăр-шатăр ........................ 69
Вĕт юр вĕçет хĕлле ........................ 70
Çырла пахчи, улма пахчи ........................ 70
Айван-çке пулнă эпĕ темшĕн ........................ 71
Хăй евĕрлĕ тапхăр хĕл умĕ ........................ 72
Хам алăпа чутларăм йĕтĕр ........................ 73
Пирн пурнăç хăвăрт улшăнуллă ........................ 74

## КУÇÇУЛĔПЕ ЙĔРЛЕННĔ ЯРĂМ

Каятăп эпĕ ывăлăм патне ........................ 74
Кĕрхи çилпе кашлать вăрман ........................ 76
Раштав ........................ 77
Кашни вулли – арман йĕки ........................ 79
Хысак пек вырăн. Кивĕ юр ........................ 79
Чун туртăмĕ ........................ 80
Хура гранит кăшт йăлтăр ........................ 81
Ывăлпа хĕр çума-çум ........................ 83

## СĂВĂ САВĂРНĂ ЯРĂМ

Калем тытатăп ........................ 85
«Катаран курнать хăла» ........................ 86
Туй мешехи ........................ 87
Сăвă кустăрми ........................ 90
Сăвă савăрни ........................ 91
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать ........................ 92

Никита Ларионович Ларионов

# БАБЬЕ ЛЕТО

Стихи на чувашском языке

Издается в авторской редакции

Вёрстка *Шутеевой Н.П.*
Дизайн обложки *Лукиной Н.Л.*

Подписано в печать 25.01.2010. Формат 60х84/32.
Бумага офсетная. Печать оперативная.
Гарнитура Таймс. Физ.печ.л. 3.
Тираж 150. Заказ №1.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В.
"Новое Время".
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 46-43-46.



Ларионов Никита Ларионович Элĕк районĕнчи Кармал ялĕнче çуралса ӳснĕ (1932.2.7.).Тенири çичĕ класлă, Элĕкри И.Я. Яковлев ячĕллĕ вăтам шкулсенче, 1951-1955 çулсенче И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн чăваш чĕлхипе литератури уйрăмĕнче вĕреннĕ. Салтакра пулнă, КПСС Элĕк райкомĕнче пропагандистра, Вăрмар районĕнчи Урнар, Шăхаль, Элĕк районĕнчи Тени, Хирлеппуç, Элĕк шкулĕсенче ĕçленĕ. СССР спорт мастерĕ. Унăн «Йĕпкĕн хĕрлĕ хăю» (1974 ç.), «Олимп каçалăкĕ» (1979 ç.), «Олимпийский балл» (1986 ç.), «Хĕр тупри» (2001 ç.) кĕнекесем пичетленсе тухнă.«Ват ăшши» - авторăн пĕрремĕш сăвă пуххи.